Чебоксарская Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 17 ЕРНЕКУН 137 (4950) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать · *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* · Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Грузипе Армени халăхĕсем хăйсен республикĕсен Верховнăй Совечĕсене суйларĕç. Телеграф халь çеç суйлавсен итогĕсем çинчен хыпар илсе килчĕ: Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнĕрен чаплă çĕнтерÿ тунă! Пур çĕрте те—Грузин ССР, Армйан ССР, Аджари АССР тата Абхази АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали мĕн пур суйлав округĕсенче—никам аркатайми Сталинла блок кандидачĕсене суйланă. Грузипе Армени ĕççыннисем çеç мар, тата ССР Союзĕнчи мĕн пур халăхсем çак хыпара хаваслăн хĕпĕртесе кĕтсе илеççĕ.

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Грузин СС Республикĕнче сасăланă çĕре суйлавçăсенчен 99,2 процентĕ тата Армйан СС Республикĕнче 99,6 процентĕ хутшăннă. Тбилисире суйлав урнисем патне суйлавçăсем 99,9 процент пынă.

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсенче сасăланă çĕре хутшăннисенчен 99,6 процентĕ коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă. Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет Суйлавĕсенче те сасăланă çĕре хутшăннисенчен çавăн пекех 99,6 процентĕ коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă.

Итог калама çук чаплă! Ĕççынни массисен хăйсен мораллĕ-политикăлă пĕрлĕхне тата коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çирĕп пĕтĕçсе тăнине çĕнĕрен демонстрацилерĕç.

Ийунĕн вуниккĕмĕшĕ, декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ пекех, Грузипе Арменире пĕтĕм халăх праçникĕ пулнă. Тбилисири Ленински суйлав округĕнче тăван çĕршыв çинчен, парти çинчен, çак округри баллотировкăна тăнă Сталин йулташ çинчен музыкăпа йурăсем кунĕпех йантраса тăнă. Боржомире суйлавçăсем сасăласа тухнă хыççăн та час саланман, вĕсем унта йурланă тата ташланă çĕрте хутшăннă. Хулора (Аджари) суйлавçăсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе тата çемйисемпе, праçник тумтирĕсемпе тумланса хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçа кĕртме суйлав участкисене пынă. Халăх вĕçĕмсĕр савăннă, çак вăл Ленинла-Сталинла наци политики çĕнтернин савăнăçĕ, большевикла парти йертсе пынипе хăйсем вальли тата пулас ăрусем вальли телей çĕнсе илнĕ халăхсен тăванлă туслăхĕ çĕнтернин савăнăçĕ пулнă.

Пур çĕрте те ĕççыннисен политикăлă активлăхĕ калама çук пысăк пулнине палăртнă. Нумай вырансенче суйлавçăсем 6 сехетчен чылай малтан пухăнса çитнĕ, вĕсем йуратнă çынсен йачĕсене çырнă суйлав бÿллетенĕçене урнăсене чи малтан йарасшăн пулнă. Праçник чухнехи пек капăрлатнă хуласемпе йалсенче те, Кавказ тÿрчĕн сăрчĕсем хушшинчи инçетри аулсенче те, Хуратинĕс çыранĕнчи курортсенче те—пур çĕрте те кăмăлсем çĕкленсе хавасланса тăнă. Совет суйлавçисем урнăсене Сталинла блок кандидачĕсен йачĕсене çырнă бÿллетенсем йанă. Çак активлăх, çак пур çĕрте те пулнă çĕкленÿ—Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ хыççăн харăссăн пыракан совет çыннисен шухăш-кăмăлĕсене йепле чаплăн палăртса тăраççĕ вĕсем!

Грузипе Арменири ĕççыннисем суйлавсен кунне çĕнĕрен паха çитĕнÿсем тунипе палăртрĕç. Камарлинск районĕнче (Армени) колхозсем ийунĕн 12-мĕш тĕлне çĕрлаптăкне иккĕмĕш хут çумласа пĕтернĕ, нумайĕш районсенче çĕр мамăкне виççĕмĕш хут та çумласа тухнă. Тбилисире вакунсем йусакан 5-мĕш участкăри ребочисем ийунĕн 12-мĕшĕнче çур çул планне срукчен тултарнă. Паравуссемпе вакунсем йусакан Сталин йачĕпе тăракан саватри паллă стаханавĕц, депутата суйлама тăратнă кандидат, халĕ ĕнтĕ Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутачĕ, Девсурашвили йулташ ийунĕн 11-мĕшĕнче нормăна 23 хут тултарса калама çук чаплă рекорд тунă. Çав кунах вăл саватри тимĕрçсен пĕтĕм бригади нормăна 780 процент тултарнă. Çак ĕççенчĕ ĕнтĕ—хăйсен тăван çĕршывне тата хÿтлăрах тума тăрăшакан совет граждăнĕсен çÿлĕ туйăмĕсем!

Грузин ССР, Армйан ССР, Абхази АССР, Аджари АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă. Вĕсен пĕрремĕш кандидачĕ—Иосиф Виссарионăвич Сталин. Суйлав урнисем патне çĕршер пин çынсем Сталин йачĕпе пынă, уншăн, унăн мухтавлă соратникĕсемшĕн, Сталин пăхса ÿстернĕ çынсемшĕн—партипе тата партире тăман большевиксемшĕн—сасăларĕç Грузипе Армени халăхĕсем. Верховнăй Советсене халăх хамăр тăван çĕршывăн пархатарлă патриочĕсене, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн ним пăркаланмасăр кĕрешекенсене, Ленин—Сталин ĕçне вĕçне çитиех парăннă чи лайăх çынсене суйларĕ.

Сталинла блокăн йуратнă кандидачĕ йатне—партире тата партире тăман большевик йатне çырнă бÿллетене урнăна йарса, суйлавçăсем пирĕн Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕшĕн, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕшĕн, Совет правительствишĕн, коммунисăмшăн сасăларĕç. Вĕсем Грузипе Армени халăхĕсене виçĕ хутлă пусмăртан—вырăс царисăмĕн, тĕнче капиталисăмĕн тата хăйсен буржуазин пусмăрĕнчен çăлса кăларнă партипе Совет влаçĕшĕн сасăларĕç. Патша вăхăтĕнче мирлĕ пурăнма пултарайман Армени халăхсем, дошнаксем вăхăтĕнчи талăх-туратсен çĕршывĕ, куççуль çĕршывĕ пулнă Армени халăхĕсем, —Совет влаçĕшĕн сасăларĕç, мĕншĕн тесен „Совет влаçĕн идейи çеç мир тата нацине çĕклемелли май кÿрсе пачĕ“ (Сталин). Ĕмĕрсем хушши хуйха-суйхă тата асап тÿссе пурăннă, меньшевиксен чăрсăрлăхĕпе асапланнă Грузи халăхĕсем большевиксен партипе Совет влаçĕшĕн сасăларĕç, мĕншĕн тесен большевиксен партипе Совет влаçĕ çеç Грузине чăн-чăн чечеклесе йешересси патне илсе пычĕç. „Патша тарçисемпе литератури лакейсем Грузине императăрлă Российăн коронинчи бриллиант тесе калама йуратнă. Бриллиант Грузи ĕççыннисен куççулĕпе тата йунĕпе шÿнине çав господасем пĕле-тăркачах шарламасăр тăнă. Грузи халь тин чăн-чăн бриллиант пулса тăрать, хăйĕн халăхĕ вальли те тата пĕтĕм Совет Союзĕ вальли те чăн-чăн хаклă çĕршыв пулса тăрать“ (Ворошилăв).

Грузипе Армени ĕççыннисем Ленин—Сталин партийĕшĕн, унăн шалти тата тулашри политикишĕн сасăларĕç, çав политикăна пула совет халăхĕ акă ĕнтĕ вунултă çул хушши ытла вăрçăла çапăçусенчен хăтăлса пурăнать тата мирлĕ пурнăçăн ырлăхĕсемпе усă курать.

Грузипе Армени ĕççыннисем, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, Ленин—Сталин партишĕн сасăласа, пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе вăл никама та пăханмасăр пурăнасси çине алă çĕкленĕкен халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла тĕпренчĕксене пысăккăн тарăхса курайманнине палăртса пачĕç.

Грузипе Арменири рабочисем, хресченсем, совет интеллигенцийĕ Ленин—Сталин партишĕн сасăларĕç, мĕншĕн тесен большевиксен аслă партийĕ, унăн ирĕк-кăмăлĕ, унăн ăсĕ, унăн генийĕ пирĕн тăван çĕршыва хăватлă социалисăмлă державă, мĕн пур малта пыракан етемлĕхĕн мухтавĕпе шанчăкĕ туса хунине совет халăхĕ пĕлет, курать, туйать.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пайан Грузипе Арменири йулташĕсене çĕнтерÿ тунă йатпа тăванлă ырă сунса саламлаççĕ! Вĕсем ытти союзлă тата автономлă республикăсен ийунĕн 24-мĕшпе 26-мĕшĕнче пулмали Верховнăй Советсен суйлавĕсенче Грузипе Арменири суйлав кампанин итогĕсене тата ытларах илемлетме, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерÿне йышлатма хатĕрленеççĕ.

(„Правда“ умстатйи, ийунĕн 15-мĕш).

Халăх шанса суйланисем

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсен итогĕсем

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем ийунĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ, суйлавсенче сасă правипе усă куракан 611.649 çынран,—605.907 çын сасăланă, вăл 99,6 процент пулать.

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче пуринче те коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 603.469 çын сасăланă—вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,6 процент пулать.

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Советне 256 депутат суйланă. Депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем пулса тăраççĕ. Суйланă 256 депутатран—коммуниссем 156 çын, тата партире тăманнисем 100 çын шутланаççĕ. Депутатсем хушшинче хĕрарăмсем 65 çын, арçынсем—191 çын.

Йереван хулинчи 1-мĕш номĕрлĕ СК суйлав округĕ тăрăх Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне пĕтĕм халăх кандидатне—халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа суйланă. Йереван хулинчи 33-мĕш номĕрлĕ Гедарчайски округĕ тăрăх аслă Сталинăн çывăх соратникне, Совет правительствин пуçлăхне—Молăтăв йулташа суйланă. Йереван хулинчи 9-мĕш номĕрлĕ Савăт округĕ тăрăх аслă Сталинăн çывăх соратникне ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне Микойан йулташа суйланă. (ТАСС).

Столицăри суйлав округĕсенче

РСФСР Верховнăй Советне суйлас кун çывхарса килет.

Столицăри ĕççыннисем çак историлĕ куна пысăк çĕкленÿпе хатĕрленеççĕ.

Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем хăйсем депутата суйлама палăртнă кандидатăн, пĕтĕм халăхăн пĕрремĕш кандидачĕн—Сталин йулташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн вĕренеççĕ. Çак ĕçре вĕсене ПСК(б)П Сталински райкомĕ организациленĕ выставка пысăк пулăшу парать, унăн експоначĕсем Сталин йулташăн пурнăç çулĕсене, унăн револуцилĕ кĕрешÿне кăтартса параççĕ. Выставкă курма рабочисем, служăщчисем, килхуçи хĕрарăмсем, стариксемпе çамрăксем пĕрмайах пыраççĕ. Выставкăна вунпĕр участкăри суйлавçăсем, хапрăксемпе саватсенчи рабочисен ушкăнĕсем, агитатăрсем, пенçионерсен темиçе ушкăнĕсем тата ыт. те пырса курнă.

Куйбышĕвски суйлав округĕнчи 4.000 агитатăр тата 125 довереннăй кашни кунах суйлавçăсен йышлă массисем хушшинче большевикла агитаци ĕçне туса пыраççĕ. Округра 200 стена хаçачĕ тухса тăрать. Агитпунктсем организациленĕ екскурçисемпе массовкăсенче пиншер суйлавçăсем пулаççĕ. Ийунĕн 12-мĕшĕнчи канмали кун Мускав—Атăл каналĕ тăрăх организациленĕ екскурçисем массăсемпе вăрмана кайса çÿрени, Политехнически музейне папанинĕцсен выставкине кайса курнисем питĕ анăçлăн иртнĕ.

(ТАСС).

Парти сйесĕсемпе конференцийĕсенче

■■ Ийунĕн 15-мĕшĕнче Тбилисире Грузи К(б)Партин XI-мĕш сйесĕ уçăлнă.

Сйеса Грузи компарти Тĕп Комитет çекретарĕ Л. П. Берийа йулташ уçнă.

Тăвăллăн, нумайччен саламласа сйес хисеплĕ президиума Сталин йулташа, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов, Чубарь, Хрушчов, Димитров, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйланă.

Кун йĕркине тата регламента йышăнса çирĕплетнĕ хыççăн сйес калама çук пысăк çĕкленÿпе Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

■■ Ийунĕн 15-мĕшĕнче Азербайджан К(б)Партин XIV-мĕш сйесĕ хупăннă. Сйесре пурте пĕр шухăшлăн пулса Азербайджан К(б)Партин Тĕпкомĕн политикăлă çулйĕрне тĕрĕс тесе йышăннă, практикăлă ĕçне ырланă.

Вăрттăн сасăласа Азербайджан К(б)Парти Тĕпкомĕн составне 75 členтан тата 20 кандидатран суйласа хăварнă.

Калама çук пысăк çĕкленÿпе делегатсем партин тата халăхăн генилĕ çулпуçĕ аслă Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

■■ Азербайджан К(б)Партин Тĕпкомĕн пĕрремĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Азербайджан К(б)Парти Тĕпкомĕн пĕрремĕш çекретарне Багирăв йулташа суйланă.

■■ Ийунĕн 15-мĕшĕнче партин Мускав облăçĕнчи организацин VI-мĕш конференцийĕ хăйĕн ĕçĕсене пĕтернĕ. ПСК(б)П Мускав облăç комитечĕн составне 65 член тата 20 кандидат, ревизи комиççине—11 çын суйласа хăварнă.

Конференци Украина К(б)Партин XIV-мĕш сйесĕ йанă саламлă çырăва хĕрÿлĕн йышăннă.

Калама çук пысăк хаваслăхпа Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

■■ Ийунĕн 15-мĕшĕнче партин Ленинград облăçĕнчи организацин VII-мĕш конференцийĕ хупăннă.

Вăрттăн сасăласа ПСК(б)П Ленинград облăç комитечĕн составне 65 член тата 20 кандидат суйласа хăварнă.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн тата ПСК(б)П Ленинград хула комитечĕн çекретарне А. А. Жданăв йулташа пурте пĕр шухăшлăн пулса облăç комитечĕн членне суйлани çинчен пĕлтернине конференци тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Пысăк çĕкленÿпе те хаваслăхпа, тăвăллăн оваци туса халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

■■ Таджикистан К(б)Партин Тĕпкомĕн пĕрремĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Таджикистан К(б)Парти Тĕпкомĕн çекретарĕсене Протопопăв, Ашурăв, Исайĕв йулташсене суйланă.

(ТАСС).

ВСЕ НА ВЫБОРЫ

В ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ РСФСР

„Пурте РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавне!“ ИЗОГИЗ кăларнă плакат. („Пресклише“).

Грузипе Армени халăхĕсем чĕре тулли кăмăлпа хĕпĕртеççĕ

Халăхсен çулпуçне Сталин йулташа Грузи тата Армени СС Республикĕсен Верховнăй Совечĕсене депутата суйланă хыпар Грузипе Армени хулисемпе йалĕсем тăрăх çиçĕм хăвăртлăхĕпе сарăлнă. Ĕççыннисем вăл хыпар çинчен савăнса калаçаççĕ, коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ çĕнтернĕ йатпа пĕр-пĕрне сывлăх сунса саламлаççĕ.

Вăл туйăмсене нумай йышлă митингсенче тухса калаçнă çынсен сăмахĕсенче уçăмлă палăртса панă.

Хошури хулинче (Грузи) пулса иртнĕ митингра Адовийа агроном сăмах тухса каланă.

— Грузи СС Республикĕн Верховнăй Советне халăхсен çулпуçне Сталин йулташа суйланипе,—тенĕ вăл—епĕр пит те телейлĕ тата тулли кăмăллă.

Совет Арменин столицинчи—Йереванри мĕн пур предприйатисемпе учрежденисенче нумай йышлă митингсем пулса иртнĕ.

Кирăв йачĕпе тăракан СК комбинатри рабочисемпе служăщчисен митингне 2.500 çын пухăннă. Вĕсем аслă Сталиншăн сасăлама телейлĕ пулнă. Тĕп Суйлав Комиççи суйлавсен результачĕсене пĕлтернине чĕре тулли хаваслăхпа оваци туса тата пĕтĕм халăх депутачĕ Сталин йулташ йачĕпе саламласа кăшкăрса кĕтсе илнĕ.

— Суйлавсен результачĕсем,—тенĕ митингра тăваттăмĕш участкăри суйлав комиççи председателĕ Арутюнйан йулташ,—совет халăхĕн мораллĕ-политикăлă пĕрлĕхне, вăл хăйĕн тăван çĕршывне, коммуниссен партине, хăйĕн тусне, ашшĕне, учителне—аслă Сталина хĕрÿлĕ йуратнине тата тепĕр хут пĕтĕм тĕнче умĕнче демонстрацилĕсе кăтартрĕ.

(ТАСС).

Шишкин йулташ хăйĕн суйлавçисем патĕнче

ÇĔМĔРЛЕ. Ийунĕн 13-мĕшĕнче Хутар суйлав участкинчи суйлавçăсем хăйсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа Шишкин йулташпа тĕл пулнă йатпа Хутарта аслă пуху пулчĕ. Пухура 200 çынна йахăн пулчĕç. Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри сăмах тухса каларĕç. Вĕсем пурте Хутар суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн—Шишкин йулташшăн сасăлама хатĕрри çинчен каларĕç. Пухура В. М. Шишкин йулташ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тухса каласа пачĕ.

Шишкин йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртса пысăк шанчăк хунишĕн тав тăватăп. Епĕ ку таранччен партипе правительствă хушнă пур ĕçре те тÿррĕн те тĕрĕссĕн ĕçленĕ, социалисăм строительствинче чăрмантарса пыракан халăх тăшманĕсемпе вирлĕн кĕрешнĕ. Есĕр мана çак пысăк ĕçе тума шаннине тÿрĕ ĕçпе ответлĕп. Ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе малашне те ырма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатăп.

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен цикам çĕнейми блокĕ!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Кастельон патĕнчи хăйăр çапăçусем

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италипе Германи интервенчĕсем Кастельон районĕнче (Испанин Вăтаçĕрти тинĕс çыранĕнче) пысăк вăйсем илсе пырса тултарнă. Анчах,—тесе çыраççĕ хаçатсем,—интервентсем Кастельона тытса илес тесе мĕн пур вăйа хурса вăрçни ахалех пулать. Кастельон халĕ те республиканĕцсенех пулса тăрать.

Пăлхавçăсен 100 самольота йахăн хула çине тата Кастельон районĕнче вăрçакан республиканĕцсен позицисем çине пиншер бомбă пăрахнă, вĕсен бомбăсем парахса тискеррĕн тапăннипе республиканĕцсем хăйсене хирĕç хыттăн тăрса вăрçас ирĕкне хуçасшăн пулнă. Республикă салтакĕсем бомбăсем парахнинчен тарса пытаннă, анчах пăлхавçăсен çуран çарĕ çине тăрса тапăнма пуçласан, республикăн оборонă постисене пурне те республика салтакĕсем çĕнĕрен тытса илнĕ. Пăлхавçăсене хирĕç пулеметсенчен пеме пуçласан вĕсем вара кайала чакнă.

Испанири пăлхавçăсемпе Италипе Германи интервенчĕсем Кастельон патĕнче кăштах малала кайма пултарни вăл—йулашки икĕ ерне хушшинче Испанине Германире туса хатĕрленĕ хĕçпăшалсене масăлăн илсе çитерсе панипе кăна пулма пултарнă.

Пăлхавçăсем Кастельон патĕнче тунă çухатусем çав тери пысăк. Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, пăлхавçăсен Левантă фрончĕн участкинче 40 пин çын вилнĕ. Итали дивизисем Арагон фрончĕнче тунă çухатусем 10 пин çын шутланать.

(ТАСС).

Чемберлен зайавленийĕ

ЛОНДОН, ийунĕн 14-ш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пайан обшчинăсен палатинче правительствăна Испанири пăлхавçăсем Англи карапĕсене шыва путарни çинчен, Чехословакири лару-тăру çинчен тата Австрине кивçен панă укçасем çинчен чылай ыйтусем панă. Англи карапĕсем çине тапăннисем пирки панă ыйтусене ответлесе, премйер Чемберлен çапла каланă: территорилĕ шывсем çинче иншĕ çÿренĕ вăхăтра вăрçă пыракан районсенчи портсене кĕрекен карапсене хÿтлес йенĕпе, Англи правительстви вăрçă ĕçĕсене активлăн хутшăнма хатĕр мар пулсан, витĕмлĕ пулăшу пама пултарайманнине Англи правительстви ĕненсе çитрĕ. Çавăнпа та правительствă Англин коммерцилĕ карап хуçисене асăрхаттарса каланисене тепĕр хут калама тивет. Англи карапĕсем хăйсем çине тапăнас хăрушлăх пур портсене кĕме хăйсем çине шансан кăна пултараççĕ. Çакăнпа пĕрлех, тенĕ Чемберлен, Англи карапĕсем çине час-часах тапăннисем, тепĕр чухне пĕле-тăркачах йурийех тапăнса çынсене те вĕлернисем, Бургосри влаçсемпе Англи правительстви хушшинчи туслă хутшăнусенче пысăккăн палăрмасăр тăма пултараймаççĕ Апрелĕн 11-мĕшĕнчепе, тенĕ Чемберлен, Англин 22 карапĕ çине тапăннă.

Чехословаки пирки тăракан ыйту тăрăх Чемберлен çапла каланă: Англин Чехословакири посланникĕ йулашки вăхăтра Бенешпа темиçе хутчен те курса калаçнă чухне ăна Судет-Нимĕç партийĕпе калаçса татăлса Судет проблемине хăвăртрах татса пама кирлине кăтартнă.

Австрине кивçен панă укçасем пирки финанс министăрĕ Джон Саймон ответ панă, вăл: Берлинра нумайах пулмасть туса иртернĕ калаçусем вăхăтĕнче Австрине кивçен панă укçасем пирки тăракан ыйтăва кирлĕ пек татса пама май килмерĕ, тесе каланă.

Наградăсем панă

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе, Тбилисири государствă университечĕ 20 çул тултарнă май, ăслăлăхпа педагогикă ĕçĕнче тата тивĕçлĕ чаплă ĕçсем тунăшăн И. С. Бериташвили тата И. А. Джавахишвили профессăрсене Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă.


(ТАСС).

Ийунĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ

Вăл кун Чăваш ҫалăхĕ Сталин йулташпа унăн чи çывăх соратникĕсемшĕн сасăлать

Вйачеслав Михайлăвич МОЛĂТĂВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар хула 2-мĕш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар хула 2-мĕш суйлав округĕнчен тăратнă кандидат—Совет правительствин пуçлăхĕ, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ, аслă Сталинăн çывăх соратникĕ, коммунисăм ĕçĕшĕн паттăрăн кĕрешекен Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв.

Суйлавçă йулташсем! Сире Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв кандидатуришĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Молăтăв йулташ пирĕн парти пытанса ĕçленĕ çулсенче рабочи класпа хресченсене организацилеçе çутă, савăнăçлă пурнăçшăн кĕрешме илсе пынă; граждăн вăрçи çулĕсенче Ленин—Сталин партипе пĕрле пĕтĕм сфвет халăхне шурăгварди бандисемпе империалисла интервентсене хирĕç кĕрешме организацилесе пĕтĕçтернĕ; вăл реконструкци тапхăрĕпе икĕ пилĕкçуллăх тапхăрĕнче аслă Сталинпа алла-алăн пырса пирĕн нумай нацилĕ аслă çĕршыва çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне илсе пынă; вăл тĕнчен ултăмĕш пайĕнче социалисăм çĕнтермеле тунă; вăл аслă Сталинпа пĕрле халăхăн пур йышши тăшманĕсене те хирĕç кĕрешнĕ.

Ленинпа Сталинăн тĕрĕс вĕренекенĕпе соратникĕшĕн, халăхăн тӳрĕ ывăлĕшĕн, пролетари революцин пур тапхăрĕсенче те Ленинпа тата Сталинпа алла-алăн пырса кĕрешнĕ, партипе пĕрле, унăн пуçне тăрса коммунисăм ĕçĕшĕн, ĕçсыннисен культурăлă та пуйăн пурнăçĕшĕн кĕрешекен паранми большевикшĕн, коммунисла партине тăвакансенчен пĕри пулнă çыншăн—совет правительстви пуçлăхĕшĕн—Молăтăв йулташшăн сасăлăр!

Лазăрь Моиçейĕвич КАГАНОВИЧ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăр хулинчи чукунçул суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăр хулинчи чукунçул суйлав округĕнчен тăратнă пирĕн кандидат—Лазăрь Моиçейĕвич Каганович—ПСК(б)П Тепком çекретарĕ, ССР Сойузĕн Йăвăр Промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ, Çулйĕр Халăх Комиссарĕ.

Суйлавçă йулташсем! Хамăрăн сасăсене ПСК(б) Партин пахлă руководителĕсенчен пĕрне, Сталин йулташăн паттăр соратникне, большевикла масăна социалисăм çентерĕвĕн кĕренĕвне илсе пыракан пултарулă организатăра, Ленин—Сталин партишĕн пĕтĕм вăйран тăракана, граждăн вăрçи çулĕсенче Совет влаçĕшĕн революцилĕ çапăçусенче кĕрешсе пиçĕхнĕ паттăра—Йăвăр Промышлĕннăçăн сталинла Халăх Комиссарне, Çулйĕр Халăх Комиссарне—Лазăрь Моиçейĕвич Каганович йулташа парар!

Халăх тăшманĕсем, тăван çĕршыва сутакан ирсĕрсем—троцкиссем, зиновйĕвецăсем, бухаринцăсем, буржуалă националиссем—урса кайнă фашисăма тара кĕрĕшнĕ йытăсем—октаберти социалисăмлă аслă революцире кĕрешсе илнисене, пирĕн савăнăçлă пурнăçа туртса илме тăчĕç.

Лазăрь Моиçейĕвич Каганович—Сталин йулташăн тĕрĕс вĕренекенĕ, çывăх соратникĕ—нумай çулсем хушши Ленинпа тата Сталинпа алла-алăн тытăнса, партипе пĕрле, коммунисăмăн ĕçĕшĕн, ĕçхалăх телейĕшĕн ĕçсыннисен пур йышши тăшманĕсене хирĕç кĕрешет.

Сывă пултăр çĕршыва çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне илсе пыракан Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă пирĕн кандидат Лазăрь Моиçейĕвич Каганович!

Анастас Иванăвич МИКОЙАН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетĕрне суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Суйлавçă йулташсем! Пирĕн Йетĕрне суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Анастас Иванович Микойан.

Епĕр, Микойан йулташ лайăх большевик, пирĕн большевикла партин тата аслă ĕçхалахĕн йуратнă ывăлĕ, пирĕн тапхăрти чи аслă çынăн—Сталин йулташăн чи çывăх соратникĕсенчĕн пĕри пулнине пĕлетпĕр.

Пирĕн кандидат рабочисем хушшинчен тухнă, вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне рабочи клас ĕçĕшĕн парать. Микойан йулташ коммунисла партин тӳрĕ ывăлĕ, малашнĕ те вăл çав тивĕçе çухатас çук. Микойан йулташ граждăн вăрçи çулĕсенче тăшман тылĕнчĕ вăрттăн ĕçленĕ. Сталин йулташ йертсе пынипе Микойан йулташ Лешйĕн Кавказра Совет влаçне çирĕплетес телешпе пысăк ĕç тунă.

Нихăçан та асран кайми Кирăвпа тата Орджоникидзĕпе пĕрле XI-мĕш паттăр Хĕрлĕ Çара аста йертсе пырса, Лешйĕн кавказри халăхсене контрреволюцилĕ меншевиксен, муссаватиссен, дашнаксен пусмăрĕнчен хăтарнă.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас куна епĕр халиччен пулман пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр.

Партипĕ правительствăн тӳрĕ ĕçлекенĕсемшĕн, пирĕн çĕршыва чĕререн йуратакан çынсемшĕн тăрăшнине епĕр кулленех куратпăр.

Сталин йулташ йертсе пынипе епĕр капиталисăмăн тискер те ирсĕр йыттисемпе, троцкисла-бухаринла вăрă-хурахсемпе хăйарăн кĕрешсе пыратпăр.

Социалисăм стриоительствин пур участкисенче те пирĕн çĕнтерӳсем пысăк. Халиччен кайа йулса пынă анат-çимĕç промышлĕннăçĕ Сталинла пилĕкçуллăхсенче халăх хуçалăхĕн малта пыракан пайĕ пулса тăчĕ. Уншăн пирĕн çĕршыв ĕçсыннисем Сталин йулташăн çывăх соратникне, коммунисăмшăн хĕрӳллĕн кĕрешекен Анастас Иванăвич Микойана тав тумала.

Суйлавçă йулташсем! Ленин—Сталин партин йуратнă ывăлĕшĕн, Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăхсен йуратакан, аслă Сталинпа пĕрле ĕçсыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн, пирĕн çĕршывра социалисăм тăвассишĕн пĕтĕм пурнăçне паракан Микойан йулташшăн сасăлăр!

Сывă пултăр пирĕн Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Микойан йулташ!

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла çирĕп блокĕ!

Иосиф Виссарионăвич СТАЛИН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш савăт суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш савăт суйлав округĕнчен тăратнă пирĕн пĕрремĕш кандидат Иосиф Виссарионăвич СТАЛИН—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн генеральнăй çекретарĕ, ССР Сойузĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çулпуçĕ, Ленин ĕçне тӳррĕн малала туса пыраканĕ, Сталинла Конституцине генилĕ тăваканĕ.

Суйлавçă йулташсем! Сталин йулташ кандидатури—Чăваш республикĕн чи аслă органне суйлама палăртнă пирĕн пĕрремĕш кандидатурă. Сталин—пирĕн йалав, пирĕн мухтавлăх, пирĕн шанчăк. Сталин йачĕ—пирĕншĕн чи хаклă йат. Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕ Иосиф Виссарионăвич Сталинăн—большевикла партин мухтавлă çулпуçĕн йачĕпе пĕр уйрăлми çыхăнса тăрать.

Виçĕ революцин класлă çапăçу çулăмĕ витĕр, граждăн вăрçин фрончĕсем урлă, темиçе çулталиксем тăршши пынă вăйлă йукăнусем урлă, строительствăн йăвăрлăхĕсем витĕр, Совет влаçĕн тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре хăрасла тăмасăр тата иккĕленмесĕр Ленин—Сталин партийĕ пире йертсе пычĕ те социалисăм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ.

Сталин йачĕ—етемĕн калама çук пысăк тивĕçлĕхĕн йалавĕ, ирĕклĕ ĕçлевĕн йалавĕ, пултарулăхлă вăйсем йешĕрсе чечекленнин йалавĕ, социалисăмăн çĕнтерӳлĕ строительствин кулленхи паттăрлăхĕн йалавĕ, шанăçлă угăмпа коммунисăм патнеле илсе пыракан халăхсен савăнăçлă, телейлĕ пурнăçĕн йалавĕ.

Халăхсен телейĕшĕн хăйĕн пĕтĕм пурнăçне, хăйĕн пĕтĕм генине, хăйĕн пĕтĕм ăс-пуçне паракан Сталин йулташ кашни ĕçсыннин пурнăçне—вĕсен чунĕн, вĕсен шанчăкĕн, вĕсен кăмăлĕн уйăрăлми пĕр пайĕ пулса кĕчĕ.

Çирĕм пĕрремĕш çул ĕнтĕ пирĕн çĕршывра общĕствălа çĕнĕ строй çинчен,—експлоатацине, ĕçсĕрлĕхе, кĕлмĕçлĕхе тата выçлăха пĕлмен общĕствălа строй çинченлеса илтерсе,—Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин хĕрлĕ йалавĕ—никам çĕнтерейми хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет.

Совет çĕршывĕн халăхĕсем çапăçулă революцилĕ йалав çине Сталинла Конституцийĕн çулăмлă саспаллисемпе ĕçлев правине, канăç правине, вĕренӳ правине, ватăлсан материаллă обеспечени илсе тăрас правана çырса хучĕç.

Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтернине кăтартакан, Сталинла йертсе пынин çĕнтерӳлĕ уйавĕ пулса тăракан çав правасене никам та туртса илейрес çук. Большевиксен партийĕн çулпуçĕ, халăхсен йуратнă тусĕ Сталин йулташ генилĕ витĕр курса тăни тăшмансене, вĕсем тем тĕрлĕ маскăсем тăхăнса пытанса çӳресен те, тăрă шыв çине кăларать.

Сталин йулташ йертсе пынипе, епĕр—тăван çĕршыва троцкисла-бухаринла сутакансем, фашисла çынвĕлеренсем, ирĕклĕ Совет халăхне фашисла пусмăр айне тума хăтланнăскерсем, помещиксемпе капиталиссен влаçне тепĕр хут тавăрса лартма пăхнăскерсем çинчен тăшмансене пытарса усракан тумĕсене сӳсе пăрахса вĕсене пĕтерсе хунă.

РСФСР Верховнăй Советне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали историлĕ кунра—ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте, пĕр çын пек, суйлав йешчĕкĕсем патне пырса, хамăр сасăмăра пирĕн йуратнă йулташ Иосиф Виссарионăвич Сталина, пирĕн çĕршыва çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне илсе пына, халĕ те илсе пыракана, пирĕн тăван çĕршыври ĕçсыннисене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç кӳрекене пама кайар! Сталин йулташ йертсе пынипе, халăхăн чи хайар тăшманĕсене çапса çĕмĕрсе тăкнă, вăл йертсе пынипе пирĕн çĕршыв кĕлмĕçлĕ те кайа йулнă çĕршывран вăй-хăватлă та никам çĕнтерейми державă, пĕтĕм тĕнчери мирлĕ саманан тĕрекĕ пулса тăчĕ.

Сывă пултăр мухтавлă коммуниссен партийĕ, пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ революци!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Михаил Иванăвич КАЛИНИН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çавалкас суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çавалкас суйлав округĕнчен тăратнă кандидат—Аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕ, ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Михаил Иванăвич Калинин.

Суйлавçă йулташсем! Ватăран та ватă большевикшăн, Путилăв савăчĕн рабочишĕн, халăхăн шанчăкла, йуратнă ывăлĕшĕн—Михаил Иванăвич Калинин йулташшăн сасăлăр!

Ленинпа тата Сталинпа пĕрле ССР Сойузĕн халăхĕсене савăнăçлă, телейлĕ пурнăç туса паракан шăн, Ленинпа тата Сталинпа пĕрле халăх тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрекеншĕн, совет çĕршывĕн хăватлăхĕшĕн, аталанăвĕшĕн кĕрешес ĕçре хăйĕн пĕтĕм пурнăçне большевиксен партипе çыхăнтарнă Михаил Иванăвич Калининшăн хаваслăхпа, большевикла пĕр кăмăлла пулса сасăлар!

Хамăр сасăсене Ленин—Сталин гвардийĕн пиçĕхнĕ бойецне, пирĕн аслă çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлне—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă пирĕн кандидата М. И. Калинин йулташа парар!

Климент Йефремăвич ВОРОШИЛĂВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мушар суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мушар суйлав округĕнчен тăратнă кандидат—никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çарăн паттăр руководителĕ, Совет Сойузĕн Маршалĕ, ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕ—Климент Йефремăвич Ворошилăв.

Суйлавçă йулташсем! Хамăр сасăсене коммунисăмшăн паттăрăн кĕрешекен Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташа—Совет Сойузĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен руководителне савăнăçлăн парар! Пирĕн хĕçпăшаллă вăй хамăр чикĕсене ирсĕр фашиссенчен хӳтĕлесе тăрать, мирлĕ ĕçе кăнтăрла та, çĕрле те сыхлать.

Клим Ворошилăв граждăн вăрçи çулĕсенче çĕнтерӳсем тума хавхалантаракан пулнă. Сталин йулташ йертсе пынипе ĕçлесе, вăл Царицын патĕнче те, Варшавă патĕнче те, Перекоп патĕнче те çĕнтернĕ. Ворошилăв йулташ пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çара ырми-канми çирĕплетет. Социалисăм çĕршывĕн Çарĕ халĕ чаплă çар техникипе хĕçпăшалланнă. Клим Ворошилăв—социалисăмшăн кĕрешекен шанчăклă бойец, большевиксен партин шанчăклă ывăлĕ.

Аслă Сталинăн çывăх тусĕшĕн, соратникĕшĕн, коммунисла аслă партин шанчăклă ывăлĕшĕн—К. Й. Ворошилăвшăн, пур ĕçсыннисен телейлĕ, савăнăçлă пурнăçĕшĕн кĕрешекеншĕн пĕр кăмăллă пулса сасăлар!

Николай Иванăвич ЙЕЖОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Курачăк суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чурачăк суйлав округĕ тăрăх тăратнă пирĕн йуратнă кандидат Николай Иванович Йежов—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн çекретарĕ, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ, Шывçул Транспăрт Халăх Комиссарĕ.

Ĕлĕк мĕскĕн, ĕмĕр-ĕмĕр пусмăрта пулнă Российă çĕршывĕнчен пысăк та хăватлă гигант—Аслă Совет Сойузĕ ӳссе çитĕнчĕ. Унта тĕрлĕ халăхсем пурăнаççĕ. Анчах пĕтĕм совет халăхĕн телейĕшĕн, коммунисăмшăн кĕрешес ĕçре вăл пĕрлĕхлĕ, уйрăлми тĕреклĕ çĕршыв.

Пирĕн çĕнтерӳсем социалисăм строительствин пур участкисенче те нумай, хамăрăн тăван çĕршывшăн пирĕн савăнăç пысăк.

Епĕр çак çулталăксенче утса тухнă мухтавлă та çĕнтерӳлĕ çул аслă совет халăхĕн документĕнче—Сталинла Конституцинче уççăн курăнса тăрать.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, халăхсен аслă та тăван çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, епĕр çав чаплă çитĕнӳсене тума пултартăмăр.

Халăх тăшманĕсем, йĕрĕнчĕк вилĕсем, троцкисла-зиновйĕвла-бухаринла кайашсем совет çĕршывне хавшатасшăн, сутасшăн пулчĕç, анчах совет халăхĕн хĕрхенӳсĕр хĕçĕ, наркомвнуделĕçсен мухтавлă Халăх Комиссарĕ Йежов йулташ йертсе пыракан çарĕ социалисăм çĕнтерĕвĕсене çивĕччĕн сыхласа тăрать, ылханлă фашисăм агенчĕсене нимĕн шеллемесĕр каклаcа пырать.

Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн ĕçĕ вăл—ĕçсыннисен чи çывăх ĕçĕ.

Ирĕклĕ совет халăхĕ пĕлет: Йежов йулташ йертсе пыракан Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ—тăшмансемшĕн вутлă çиçĕм, революцин сыхăлăхлă хуралĕ, пролетариатăн çивчĕ хĕçĕ.

Суйлавçă йулташсем! Сталинла Халăх Комиссарĕ Николай Иванăвич Йежовшăн, революцин сыхăлăхлă хуралĕ пулса тăракан, пирĕн тăван çĕршывăн çĕнтерĕвĕсене, ССР Сойузĕнчи халăхсен çутă та хаваслă пурнăçне тăшмансем тапăнасран сыхласа тăракан Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн хăравсăр руководителĕшĕн сасăлăр!

Сывă пултăр совет халăхĕн хĕрхенӳсĕр хайар алли Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ тата унăн руководителĕ,—Сталин йулташăн çывăх соратникĕ Николай Иванăвич Йежов!

Андрей Андрейĕвич АНДРЕЙĔВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăхасан суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат



Андрей Андрейĕвич Андрейĕв—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн çекретарĕ—Шăхасан суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат.

ССР Сойузĕнчи ĕçсыннисем, большевиксен партийĕ йертсе пынипе, ĕлĕкхи патша Российĕнчен тĕнчери нумай нацилĕ чи пысăк чи хăватлă тата чи демократилĕ Конституцилĕ государствă туса хучĕç.

Халăх тăшманĕсем, тăван çĕршывăн ылханлă сутăнçисем—троцкиссем, зиновйевецсем, бухаринецсем—фашисăма тара кĕрешнĕ йытăсем Аслă Октаберĕн çĕнтерĕвĕсене пирĕнтен туртса илесшĕн пулчĕç, пире хаваслă та телейлĕ пурнăçсăр тăратса хăварасшăн пулчĕç.

Анчах тăшмансем хăйсем мĕн шутласа хунине тăваймарĕç. Рабочи клас диктатури тĕреклĕ, халăх тăрăхавĕ хăрушă та пысăк, социалисăмлă революци хĕсне лайăх хăйраса çивĕчлетнĕ. Çавăнпа та, кам социалисăм çĕршывĕн çĕнтерĕвĕсем çине йунлă аллине çĕклет, ăна çĕр пичĕ çинчен шăлса пăрахапăр, унăн хăйĕн пуçне хумала пулать.

Социалисăм çĕнтернипе пирĕн çĕршывра чухăнлăха тата ĕçсĕрлĕхе йаланлăхах пĕтернĕ, ĕçсыннисен масси вальли телейлĕ те культурăлă пурнăç туса панă.

Çав çитĕнӳсем чи малтан пирĕн тăван Ленин—Сталин партийĕ тăрăшнипе пулнă.

Парти тăшманĕсене хирĕç, пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтересишĕн, ĕçсыннисен культурăлă та пуйăн пурнăçĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте Сталин йулташăн шанчăкла соратникĕ—Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташ йалан малти позицисенче пынă, малти позицисенче пырать те.

Суйлавçă йулташсем! Пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсенчен пĕриншĕн, рабочи клас ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшакансенчен пĕриншĕн, большевисăмăн хайар шкулĕ витĕр тухнă, рабочи клас диктатуришĕн, пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕсен пысăк организатăрĕсенчен пĕриншĕн, пирĕн хăватлăран та хăватлă тăван çĕршыва малала чечеклентерессишĕн ывăнми кĕрешекеншĕн, Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕшĕн—Андрей Андрейĕвич Андрейĕвшăн сасăлăр!

Сывă пултăр çирĕп большевик, Сталин йулташăн чи лайăх ученикĕпе соратникĕ—Андрейĕв йулташ!

Хамӑр сасӑсене тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑл-хӗрӗсемшӗн парар!

Андрей Александрӑвич ЖДАНӐВ

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Шурча суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат.

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Шурча суйлав округӗнчен тӑратнӑ пирӗн кандидат—Андрей Александрӑвич Жданӑв йулташ—ПСК(б)П Тӗпкомӗн, Ленинград Обкомӗпе хула комитечӗн ҫекретарӗ.

Андрей Александрӑвич Жданӑв йулташӑн Совет халӑхӗн лайӑх ђенӗсем пурте пур Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑракан Жданӑв йулташ хӑйӗн пӗтӗм вӑйне, хӑйӗн пӗтӗм хӑватне хамӑрӑн аслӑ тӑван ҫӗршыв ӗҫне парать.

Социалисӑмла тӑван ҫӗршывӑн ҫулӑмлӑ патриочӗ Андрей Александрӑвич халӑх тӑшманӗсене хӑйӗн большевикла чӗрин пӗтӗм хайарлӑхӗпе курайманӗ, вӑл тӑван ҫӗршыва сутакан ирсӗрсене хирӗҫ кӗрешӗве хӑйулӑн туса пырать.

Жданӑв йулташ халӑхпа уйӑрӑлми таччӑн ҫыхӑнса тӑрать, халӑх шухӑшӗпе пурӑнать, унӑн телейӗшӗн кӗрешет. Ҫирӗп ленинӗҫ, аслӑ Сталинӑн паттӑр соратникӗ Андрей Александрӑвич Жданӑв йулташ йертсе пынипе Ленинград большевикӗсем троцкисла-бухаринла бандӑсен контрреволюцилӗ йӑвине ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ. Ленинграда социалиҫӑмлӑ тӑван ҫӗршывӑн чечеклеҫекен хули туса хучӗҫ.

Суйлавҫӑ йулташсем! Хамӑр сасӑсене пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса Сталин йулташ соратникне, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешекене, ПСК(б)П Тӗпкомӗн, Ленинград Обкомӗпе хула комитечӗн ҫекретарне, Жданӑв йулташа парар!

Сывӑ пултӑр коммунистсемпе партире тӑманнисен ҫӗмӗрӗлми Сталинла блокӗ!

Сывӑ пултӑр Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ пирӗн кандидат Жданӑв йулташ!

Николай Ҫеменӑвич ХАБАРӐВ

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Тулик Хураски суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат

Шупашкар районӗнчи „Шортан" тата Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче Николай Ҫеменӑвич Хабарӑв йулташа Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑратнӑ.

Хабарӑв йулташ 1897 ҫулта Шупашкар районӗнчи Кощкинӑ йалӗнчи чухӑн хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ.

Йӑвӑр пулнӑ Николай Ҫеменӑвичӑн ӗлӗкхи пурнӑҫӗ. Хӗлле хӑйне ваљљи ҫӑкӑр тупма кулаксем патӗнче батракра ӗҫленӗ. Ҫулла та вӑрӑм ҫӑпӑркка сӗтӗрсе кӗтӗве каймала килнӗ. Ҫавӑн пекех тата та вӑл ҫулла кирпӗч савутӗсенче те ӗҫленӗ. Йӑвӑр пурнӑҫа пула ӗнтӗ Хабарӑв йулташӑн шкулта вӗҫӗ ҫул вӗренсенех пӑрахмала пулнӑ.

1918 ҫул. Граждӑн вӑрҫин хӗрӳлӗ вӑхӑчӗ пуҫланнӑ. Шурӑгвардейҫӑсен банди рабочисемпе хресченсене йун ӑшне путарас тесе, совет республикине хупӑрласа илнӗ. Ҫав вӑхӑтра — 1918 ҫултан 1920 ҫулччен—Хабарӑв йулташ Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче пулса, кӑнтӑр тата хӗвеланӑҫ фрончӗсенче Социалисӑмла Аслӑ Октябӗр революцийӗ ҫӗнсе илнисене сыхлать.

Тискер интервентсемпе ҫапӑҫнӑ ҫӗрте амансан Хабарӑв йулташӑн килне таврӑнма тивнӗ. Ҫапла киле таврӑнсан вӑл 1926 ҫулччен йалхуҫалӑхӗнче тата хӑйсен йалӗнче йалсовет ҫекретарӗ пулса ӗҫлет.

Хабарӑв йулташ хӑйсен йалӗнчи колхоза организацилекенсенчен пӗри. Вӑл колхозниксем хушшинче пысӑк авторитетпа усӑ курать. 1930 ҫултан пуҫласа 1936 ҫулччен вӑл хӑйсен колхозӗн председателӗ пулса ӗҫлет.

1926—1929 ҫулсенче Хабарӑв йулташ вулӑсри ӗҫтӑвакан комитет членӗ, райӗҫтӑвком членӗ, Шупашкарти вӑрман промысла ертел правлени председателӗ. Халӗ Хабарӑв йулташ Шупашкар райӗҫтӑвкомӗн председателӗ.

Николай Ҫеменӑвич Хабарӑв йулташ 1931 ҫултанпа ПСК(б)П членӗ.

Ӗҫре йалсоветсемпе колхозсене большевикла йертсе пынипе, ҫынсемпе йаланах кӑмӑллӑн, тӳррӗн ӗҫлесе пынипе Хабарӑв йулташ хӑйсен районӗнчи ӗҫҫыннисем хушшинче пысӑк хисеппе усӑ курать.

Николай Павлӑвич ПАВЛӐВ

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Вӑрнар суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат.

Николай Павлӑвичӑн ача чухнехи пурнӑҫӗ—йӑвӑр пурнӑҫ пулнӑ. Унӑн ашшӗ 1913 ҫулта вилнӗ. Ҫапла, вӑл ашшӗнчен 8 ҫулхи ача йулнӑ. Ҫав вӑхӑтра вӗсен ҫемйи Пӑртасри (Вӑрмар р.) Ҫерпӳве пурӑнма куҫать. Пӗтӗм ҫемйипех помещицӑ Леймӑн патне тара кӗрӗшсе ӗҫлеме кӗнӗ.

1919 ҫулта Павлӑв йулташ комсомола, 1924 ҫулта партине кӗрет. Тутар республикӗнчи коммунисла аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ. Чистай кантонӗнчи Йегоркинск вулӑҫӗнче партин вулӑсри комитечӗн ҫекретарӗ пулса ӗҫленӗ. Хӗрлӗ Ҫарта пулнӑ.

Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнсан 1928 ҫулта вӑл ПСК(б)П Вӑрнар райкомӗн агитаципе пропагандӑ пайӗн пуҫлӑхӗ тата райком ҫекретарӗн заместителӗ пулса ӗҫленӗ. 1930 ҫултанпа парти райком ҫекретарӗ пулса ӗҫленӗ.

1931 ҫулта Павлӑв йулташа парторганизаци Горькине марксисӑм-ленинисӑм институтне вӗренме йарать. Вӑл ҫирӗп ҫын пулнине, парти ӗҫне чӗререн парӑнса ӗҫленине кура, ӑна 1937 ҫулта Ӗлӗк МТС политпай начальникӗ пулса ӗҫлеме йарӗҫҫӗ. Кунта вӑл колхозсене организаципе хуҫалӑх йенчен ҫирӗплетес, колхозсене клас тӗлӗшӗнчен йурӑхсӑр ҫынсенчен тасатас, парти тата колхоз кадрӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе ӗҫлет.

МТС политпайӗсене пӗтерне хыҫҫӑн Павлӑв йулташ 1937 ҫуллчен Вӑрнар райком ҫекретарӗ пулса ӗҫлет. Иртнӗ ҫул июнь уйӑхӗнче ӑна ПСК(б)П Обком членне тата парти Обкомӗн шкул пайӗн пуҫлӑхне суйланӑ. 1937 ҫулта сентябӗр уйӑхӗнче Павлӑв йулташа ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн виҫҫӗмӗш ҫекретарне суйлаҫҫӗ.

Павлӑв йулташа Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Вӑрнар суйлав округӗнче регистрациленӗ.

Марийӑ Федӑрӑвна ФЕДӐРӐВА

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Чупай суйлав округӗнче регистрациленӗ кандидат

Вӑрмарти спортинвентар хапрӑкӗнчи рабочисемпе работницӑсем тата Вӑрмар районӗнчи „Победа", „Сталь", „Ударник" колхоз колхозникӗсем Чупай суйлав округӗ тӑрах Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Марийӑ Федӑрӑвна Федӑрӑва йулташа тӑратнӑ.

Марийӑ Федӑрӑвна 1913 ҫулта Вӑрмар районӗнчи Ҫӗнӗ Кавал йалӗнчи чухӑн хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Вӑл Совет влаҫӗ чухне вӗренсе, ӳссе ҫитӗннӗ.

Чи малтанах вӑл Вӑрмарти „Йединство" хапрӑкӗнче тата Ҫӗмӗрле комбинатӗнче, йулашкинчен Вӑрмарти спортинвентар хапракӗнче—станочницӑ пулса ӗҫлет. Вӑл стахановкӑ. Хӑйӗн ӗҫ нормине йаланах 150 — 180 процентшӗр тултарса пырать. Паха ӗҫленӗшӗн ӑна темиҫе хутчен те премилӗнӗ.

Марийӑ Федӑрӑвна общӗствӑла-политикӑлӑ ӗҫсенче активлӑ ӗҫлет. Вӑл социалисӑм строителствинче арҫынсемпе алла-аллӑн тытӑнса ӗҫлекен хӗрарӑмсенчен пӗри. Вӑл Ленин—Сталин партишӗн пӗтӗм вӑй-хӑватпа ӗҫлет. Рабочи клас диктатурине малала ҫирӗплетсе пырас ӗҫе активлӑ хутшӑнать.

Вӑл Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ пулмали шанчӑклӑ кандидат. Чупай суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем, июнӗн 26-мӗшӗнче стахановкӑ Марийӑ Федӑрӑвна Федӑрӑва йулташшӑн сасалӑр!

Йе. Д. Дмитрийӗвӑ йулташ хӑйӗн суйлавҫисем патӗнче

ТРАК. Июнӗн 11-мӗшӗнче Тӗрер тата Йӗншик Чуллӑ суйлав участкисенчи суйлавҫӑсем Чӑваш АССР Верховнӑй Совӗтне депутата Супар суйлав округӗ тӑрах суйлама регистрациленӗ кандидат ПСК(б)П Трак райком инструкторӗ Йе. Д. Дмитрийӗвӑ йулташпа тӗл пулчӗҫ. Йӗншик Чуллӑра пысӑк митинг пулса иртрӗ. Митингра 400 ҫынна йахӑн пулчӗ. Дмитрийӗвӑ йулташ суйлавҫӑсен умӗнче сӑмах тухса каларӗ.

Дмитрийӗвӑ йулташ сӑмахӗнчен

— Йулташсем! Есӗр ман ҫине пысӑк шанчӑк хутӑр. Епӗ кун пек хисепе Сталин самавинче тин курма пултартӑм. Епӗ кун пек тивӗҫе етемлехе ырӑлӑх паракан Ленин—Сталин партийӗ кӑтартнӑ ҫулпа тӳррӗн, тӗрӗс ӗҫлесе пырса илме пултартӑм.

Епӗр ӗлӗк чухӑн пурӑннӑ. Сталинла Конституци пире ваљљи чаплӑ ӗмӗр илсе килчӗ. Ҫакӑ телейлӗ савӑнӑҫлӑ пурнӑҫшӑн епӗ малашне те хастар кӗрешӗп. Сирӗн шанӑҫа епӗ ӗҫпе ответлӗп. Халӑх тӑшманӗсемпе, вӗсен кайашӗсемпе хайаррӑн кӗрешсе пыма сӑмах паратӑп.

Сывӑ пултӑр ӗҫҫыннисен ҫулпуҫӗ йуратнӑ Сталин!

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

ПСК(б)П ТӖПКОМӖНЧЕ

ПСК(б)П Тӗпкомӗ парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсене пичетре ҫутатса пырасси пирки 1938 ҫулхи мартӑн 15-мӗшӗнче Тӗпком йышӑннӑ постановленине Архангӗљск облӑҫӗнчи „Правда Севера" хаҫат мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫинчен Тӗпкомӑн пичет пайӗ пӗлтернине итленӗ. ПСК(б)П Тӗпкомӗ ҫакна палӑртнӑ: „Правда Севера", Тӗпком кӑтартса панисене пӑхмасӑрах, ку тарана ҫитсе те хӑйӗн страницисем ҫинче йалан кӗртсе пымали „Парти пурнӑҫӗ" йатлӑ пай туман тата парти темисем тӑрах материалсене йӗркелӗн пичетлесе пымасть. Май уйӑхӗнче тухнӑ номерсенчен пӗрре виҫҫӗмӗшӗнчен те ытларах пайӗнче „Парти пурнӑҫӗ" пай ҫук. Май уйӑхӗнче тухнӑ ултӑ номӗрте вӑл пайа ик-виҫ пысӑк мар информацилӗ заметкӑпа кӑна тултарнӑ.

Парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсене ҫутатса пырассине халь те ҫийелтен ҫеҫ тӑваҫҫӗ. Парти организацисен ӗҫне тӗплӗн тишкерсе тухни ҫук. Ӗҫӗн татӑкла тӗслӗхӗсене кӑтартни ҫук. Парти организацисен пурнӑҫӗнче пулса пыракан кирлӗрен те кирлӗ процессене хаҫат курмасӑрах йулать. Май уйӑхӗнче хаҫат парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх икӗ уместатйа ҫеҫ ҫырнӑ, вӑл умстатйасенче районсенчи конференцисем ҫинчен ҫутатса панӑ. Май уйӑхӗнче „Правда Севера" хаҫат страницисем ҫинче парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх 33 статйасемпе заметкӑсем пичетленнӗ пулсан, вӗсенчен 23-шӗ пухусем ҫинчен ҫырнӑ протокол пек информацисен пулса тӑраҫҫӗ, ыттисем вара—парти шкулӗсемпе кружокӗсенче занятисем мӗнле пыни ҫинчен калакан хроникӑ йеврӗлӗ заметкӑсем.

ПСК(б)П Тӗпкомӗ ҫакна хаҫатӑн пысӑк ҫитменлӗхӗ тесе шутлать: „Правда Севера" парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх ҫитменлӗхсем ҫинчен калакан материал ытларах пичетлет, кунтӑ тата кунсерен асӑнакан парти организацисен пысӑк мар йышӗ ҫинчен ҫеҫ ҫырнипе чарӑнса тӑрать. Ҫак вӑл облӑҫри парти пурнӑҫӗ ҫинчен пӗр йенлӗ пӑсса ӑнланасси патне илсе пырать. Суйлав кампани вӑхӑтӗнче массӑсем хушшинче туса пынӑ партилӗ-политикӑлӑ ӗҫӗн пысӑк опытне, ҫӗнӗ кадрсене вӗрентсе ӳстернине хаҫатра йапӑх ҫутатса пыраҫҫӗ.

Парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх редакцине ҫырусем пит сахал пыраҫҫӗ. Ҫак вӑл—коммунистсенчен хаҫата ҫырса тӑракан актив вӗрентсе ӳстерес тӗлӗшпе редакцинимӗнле ӗҫ те туса ирттерментен килет.

ПСК(б)П Тӗпкомӗ „Правда Севера" хаҫат редакторне Шарапӑв йулташа тата партин Архангӗљск обкомне редакцин парти пурнӑҫӗ пайне тӗрӗсленӗ тата политикӑ йенчен хатӗрленсе ҫитнӗ, парти ӗҫӗнчи опыт пур работниксем тупса лартма, хаҫатра „Парти пурнӑҫӗ" пайа тӑтӑшах пичетлесе пыма, хаҫат тавра ҫирӗп актив туса, парти пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх хаҫата ҫырусемпе информацисем ытларах пымала тума, партилӗ-политикӑлӑ тата историлӗ-революцилӗ темӑсем тӑрӑх ҫырнӑ пропагандисла статйасене хаҫата тӑтӑшах кӗртсе пыма хушнӑ.

* * *

ПСК(б)П Тӗпкомӗ обкомсене, крайкомсене тата нацилӗ компартисен Тӗпкомӗсене хӑйсен хаҫачӗсенче парти пурнӑҫне ҫутатса пырассин пахалӑхне хӑпартмала тума тата редакцисен парти пурнӑҫӗ пайӗсене тӗрӗсленӗ, парти пурнӑҫне пӗлекен чи лайӑх работниксем тупса лартма хушнӑ. Тӗпком крайсенчи, облӑҫсенчи тата республикӑсенчи хаҫатсен парти пурнӑҫӗ пайӗн заведуйушчийӗсене обкомсем, крайкомсем тата нацилӗ компартисен Тӗпкомӗсем ҫирӗплетмеле тунӑ.

Пропагандиссем текех улшӑннине пула

Шӑлти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн Трак районӗнчи уйрӑмӗ ҫумӗнчи парти вӗренӗвӗн кружокӗ иртнӗ кӗркуннеренпех ӗҫлет. Кружок 7-мӗш темӑна тин вӗренме пуҫларӗ.

Мӗншӗн-ха епӗр капла кайа йулса пыратпӑр? Тӗп ҫитменлӗх вӑл пропагандиссем текех улшӑнни. Малтан Педуганӑв йулташ пропагандис пулса ӗҫленӗ, унтан Йефимӑв йулташ ӗҫлерӗ.

Халь ку кружока йертсе пыма мана хушрӗҫ.

Кашни ҫӗнӗ пропагандис программӑна ҫӗнӗрен вӗрентме пуҫланӑ. Ҫапла вара кружок халь йулашки темӑна вӗренес вырӑнне VII-мӗш темӑна вӗренет.

Кружокра вӗренекенсем: Иљйин Д, Ваҫков, Тимофейӗв, Маљков йулташсем тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсем тӗллӗн нумай вӗренеҫҫӗ, мӗн ӑнланманнине манран ыйтаҫҫӗ. Епӗ вӗсене тӗплӗн ответлетӗп, хам лайӑхах пӗлмен ыйту пулсан, хатӗрленсе кайран ответлетӗп.

Ленин тата Сталин произведенисене ман кружокра вӗренекенсем занҗати умӗн ушкӑнпа пухӑнса вулаҫҫӗ, занҗатине хатӗрленмесӗр пыни ҫук.

Занҗатине пырайман йулташсемпе вӗсем йерҫнӗ вӑхӑтра татах занҗати туса ирттеретӗп.

И. Долгов.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗ аван иртет

Ӗлӗкри (Ӗлӗк р.) вӑтам шкулта вӗренекенсем ҫуркуннехи пӗлӳ тӗрӗслевне аван хатӗрленсе кӗтсе илнӗ. Пӗлӳ тӗрӗслевӗ пуҫланиччен хӑшпӗр предметсем тӑрӑх учителсем ачасемпе консультацисем туса ирттернӗ. Акӑ VI-мӗш класра вӗренекенсенчен арифметикӑна 59 процентӗ „отлично" тата „хорошо" паллӑсем илнӗ. „Плохо" паллӑ илни пӗр ача та пулмарӗ. Ҫавӑн пекех пӗлӳ тӗрӗслевӗ ытти предметсемпе те лайӑх иртет.

А. Александрӑв.

Тӑван ҫӗршыв историйӗнчен

Поҗаксен XVII-мӗш ӗмӗрти интервенцийӗ

Проф. К. В. БАЗИЛЕВИЧ

XVI-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче пансен Поҗши вырӑссен ҫӗрӗсене тытса илесшӗн питӗ вӑйла кӗрмешнӗ. Поҗшӑ королӗ Ҫтефан Баторий Мускав ҫине поход тума пысӑк план хатӗрленӗ. Римри папӑ ӑна укҫапа тата чиркӳ кӗллипе пулӑшма сӑмах панӑ.

Ҫтефан Баторий вилнӗ хыҫҫӑн (1586 ҫ.) Мускава вӑрҫапа тытса илес план пӑсӑлнӑ. Вӑл вӑхӑтра ҫарти тӗрлӗ ушкӑнсем хушшинчи кӗрешӗве пула Поҗшӑн шалти лару-тӑрӑвӗ йӑвӑрланнӑ. Хӑйне Сигизмунд III тесе йат панӑ швед королевичӗ Поҗшӑ королӗ пулса тӑнӑ.

Анчах Поҗшӑ панӗсем, вырӑс халӑхне пусмӑрлас тӗлӗшпе, Мускав государствин пур йӑвӑрлӑхӗсемпе те усӑ курасшӑн унӑн шалти лару-тӑруне тимлӗн сӑнаса пынӑ.

XVII-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӗшӗ Мускав государствинче Борис Годуновӑн феодаллӑ пусмӑрне тата крепӑҫла политикине хирӗҫ хресченсен йухӑмӗ анлӑн сарӑлнипе паллӑ пулнӑ. 1601—1603 ҫулсенче пулнӑ хӑрушӑ выҫлӑх ҫав йухӑма тата ытларах вӑйлатнӑ.

Вырӑс государствине тытса илес ӗҫе уҫҫӑнах тума шикленсе, Поҗшӑ хӑйӗн ҫыннине, вырӑс патши тӑвас тесе халӑх йухӑмӗпе усӑ курма тытӑннӑ.

Ҫав тӗллевпе Поҗшӑра: Иван Грознӑйӑн кӗҫӗн ывӑлӗ—царевич Димитрий—1591 ҫулта Угличре вилмен, вӑл хӑтӑлса йулнӑ, халь Поҗшӑра пурӑнать, тесе сӑмах сарнӑ.

1603 ҫулта пӗр паллӑ мар москвич, Поҗшӑри питӗ пысӑк пуйан Адам Вишневецки патӗнче ӗҫлеӗскер, хӑйне „царевич Димитрий" тесе йат пама пуҫланӑ. Ҫав Суйадимитрийа (Лжедимитрий) часах король Сигизмунд III йышӑннӑ. Король пансене тата ҫар ҫыннисене Суйадимитрийӑн Мускав ҫине каймалли походне тума ирӗк панӑ. Ҫав авантюрӑпа пуринчен малтан Поҗшӑри шултӑра ҫӗрхуҫисем интересленнӗ, вӗсем вырӑссен пуйан тата сахал ҫын пуранакан ҫӗрӗсем ҫине пит ӑмсанса пӑхнӑ.

Сандомирти войеводӑ Йурий Мнишек ҫав авантюрӑн пуҫлӑхӗ пулнӑ, унӑн хӗрне Суйадимитрий качча илме хатӗрленнӗ.

Суйадимитрий католиксен тӗнне йышӑннӑ тата вӑл Римри папӑна католиксен тӗнне вырӑс ҫӗрӗнче сарма пулӑшма сӑмах панӑ. Мускава илнӗ хыҫҫӑн вӑл Смоленск тата Черниговск облӑҫӗсене король аллине пама пулнӑ.

1604 ҫулхи кӗркунне Поҗшӑ ҫарӗн отрйачӗсем тата казаксен чаҫӗсем пулӑшнипе Суйадимитрий поход пуҫланӑ, вӑл поход 1605 ҫулхи июнӗн 20-мӗшӗнче Мускава йышӑнсан чарӑннӑ. Поҗшӑ панӗсен ҫынни Суйадимитрий Мускав патши пулса тӑрсан, хӑй тавра поҗаксене тата йутҫӗршывсен хуралне пухнӑ, вӗсем вырӑс столици ҫине ҫӗнсе илнӗ хула ҫине пӑхнӑ пек пӑхнӑ. Поҗшӑ ҫарӗн ҫыннисем ирсӗрле хӑтланнине пула Мускав халӑхӗ хушшинче сӗмсӗрӗн пусмӑрлакансене хирӗҫ тӑвиллӑ та рӑху тухса кайнӑ. Мускаври бойарсем, халӑх хирӗҫӗвӗ хӑйне ӗссӗн ӳссе пынине пӗлсе, влаҫа хӑйсен аллине илес ӗҫре унпа усӑ курма васканӑ.

1606 ҫулхи майӑн 17-мӗшӗнче поҗаксене тата Суйадимитрийа хирӗҫ восстани пуҫланса кайнӑ. Суйадимитрийа вӗлернӗ. Поҗшӑ ҫарӗн ҫыннисем те нумай пӗтнӗ. Бойарсем Мускав престолне Ваҫилий Иванӑвич Шуйски княҫа лартнӑ. Ҫапла ӗнтӗ Поҗшӑ хӑйӗн ҫыннине Мускав престолне лартма хӑтланни малтанхи хутӗнче ӑнӑҫусӑр пӗтнӗ.

Бойарсен патши Шуйски вӑхӑтӗнче хресченсен вӑрҫи малала пынӑ. Вӑл вӑрҫӑ халӑх восстанин лайӑх организатӑрне Иван Болотникава ҫитӗнтернӗ. Болотникӑв Мускав ҫине поход тунӑ вӑхӑтра (1606—7 ҫ. ҫ.) Поҗшӑн шалти кӗрешӗвӗ унӑн тулти политикине тӑлласа лартса, вырӑссен ӗҫне хутшӑнассине чарса тӑнӑ.

Анчах 1607 ҫулта, ҫулла, Поҗшӑ ҫӗнӗ самозванеҫа — Суйадимитрий II текенскере тупнӑ, кайран ӑна кунта „Тушинӑри вӑрӑ" тесе йат панӑ. Суйадимитрий II поҗаксен вунӑ пин ҫынлӑ ҫарӗпе тата казаксемпе Мускав патнех ҫитнӗ, анчах Мускава илме вӑл пултарайман. Вара Суйадимитрий II отрйачӗсемпе поҗаксем Мускав йуханшывӗн ҫӳлӗ ҫыранӗ ҫине, Тушинӑ йалӗ ҫывӑхӗнче, ҫирӗплетнӗ лагӗр туса вырнанҫӑ. Ҫакӑнтан вара Тушинӑри отрйадсем ҫӗршыва шалала кӗрсе, халӑхсене ҫаратнӑ, тырӑсене тата ытти ҫимӗҫсене тыта-тыта илнӗ, йалсене вут тӗртсе ҫунтарнӑ, халӑхсем ҫине йӑвӑр тӳлевсем хунӑ тата ытти майсемпе те хӗсӗрленӗ.

1608 ҫул вӗҫӗнче Поҗшӑран килнӗ пусмӑрҫӑсене хирӗҫ Российӑра халӑх йухӑмӗ ҫӗнӗрен ӳсме пуҫлать. Хресченсем, хулара пуранакансем, печӗк службӑри ҫынҫем отрйадсене пӗрлешсе „тушинеҫсене" хирӗҫ паттӑрӑн кӗрешме тытӑнаҫҫӗ.

„Ҫитӗ поҗаксене пирӗн ӗнесемпе сурӑхсене ҫини",—тенӗ хресченсем.

Ҫав вӑхӑтрах Ваҫилий Шуйски патша Швеци королӗнчен пулӑшу ыйтнӑ. Вӑл Швецийе вырӑс ҫӗрӗн Ладож кӳлли ҫывӑхӗнчи пӗр пайне панӑ, ҫавӑншӑн Швеҫирен пулӑшу отрйачӗ илнӗ. Патша племйанникӗ—М. В. Скопин—Шуйский княҫ швед тата вырӑс отрйачӗсемпе аслӑ Чулхуларан тухса Мускав патне ҫитнӗ, 1610 ҫулхи ҫуркунне вара ӑна Тушинӑри пусмӑрҫӑсенчен хӑтарнӑ.

Поҗаксем Российӑн халне лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Кунта темиҫе ҫул хушши вӑрҫӑ пулса пынӑ. Ҫӗршыв йухӑннӑ. Халӑх бойарсен патшине курайман. Ҫар хисепӗ ҫителеклӗ пулман.

Сигизмунд III король тата унӑн ҫенатӑрӗсем Вырӑс государстви ҫине татӑклӑн тапӑнма вӑхӑт ҫитнӗ тесе шутланӑ.

1609 ҫулхи кӗркунне Поҗшӑн пысӑк ҫарӗ Сигизмунд III йертсе пынипе Мускав ҫине кайма поход пуҫланӑ. Анчах Смоленск крепӑҫӗ ҫывӑхӗнче поҗаксен ҫарӗн чарӑнса тӑмала пулнӑ. Смоленскӑн пысӑк мар горнизонӗ поҗаксен пур тапӑнӑвӗсене те кайала сирсе тӑнӑ. Смоленск ҫине тапӑнассине чармасӑрах, король хӑйӗн ҫарӗсене Мускав ҫине йанӑ, гетман Жолкевскине ҫав ҫарӑн начальникӗ тунӑ. Ҫав отрйад 1610 ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнче Клушинӑ патӗнче патша ҫарӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче сутӑнчӑк шведсем поҗаксен йенне куҫнӑ; Мускав ҫине ҫул уҫӑ пулнӑ.

Анчах вырӑс бойарӗсемпе дворйанӗсем те сутӑнчӑк шведсенчен лайӑхах туман. Вӑрҫӑ тӗлӗшпе ӑнӑҫусӑрсем пулнӑ пирки халӑх восстанийӗ ҫӗнӗрен ҫекленесрен хӑраса, вӗсем тӑшманпа килӗшме шут тытнӑ. Шуйскине патшаран кӑларса пӑрахнӑ, бойарсен вӑхӑтлӑх правителствине туса хунӑ. Жолкевски Мускав патне ҫывхарсан, бойарсем унпа калаҫса, Поҗшӑ королӗн ывӑлне—Владислава патша тума йышӑннӑ, вара поҗаксен ҫарӗсем Мускава кӗрсе кайнӑ.

1610 ҫул вӗҫӗнче Российӑн лару-тӑрӑвӗ питӗ йапӑх пулнӑ. Унӑн столицине—Мускава—Поҗшӑ ҫарӗсем тытса илнӗ. Ишӗлсе пӗтнӗ ҫӗршывра Поҗшӑ пусмӑрҫисем чупса ҫӳренӗ, вӗсем пурлӑхсене хӑйсен аллине туртса илнӗ, вырӑс ҫӗрӗсене хӑйсен ҫыннисене валеҫсе панӑ, вырӑс халӑхне хӗсӗрленӗ тата ҫаратнӑ. Поҗшӑ ҫарӗсем Смоленска ҫаплах хупӑрласа тӑнӑ. Ҫурҫӗрте шведсем Новгорода тытса илнӗ.

1611 ҫулхи ҫуркунне москвичсем Поҗшӑ пусмӑрҫисене хирӗҫ ҫӗкленнӗ. Сӗтелсенчен, ларсенчен, пӗренесенчен хӳтлӗхсем туса, вӗсен хыҫӗнчен поҗаксем ҫине пенӗ, пӳрт тӳписенчен пенӗ, чулсем ыватнӑ.

Ҫак восстанийе хирӗҫ ответлесе, Поҗшӑ пусмӑрҫисем Мускава вут тӗртсе ҫунтарма пуҫланӑ. Столицӑн пысӑкрах пайӗ тӗпӗ-йӗрӗпех ҫунса кайнӑ.

Анчах Мускавпа пӗр вӑхӑтрах поҗаксем хӗсӗрленине хирӗҫ пӗтӗм ҫӗршыв ҫӗкленнӗ. Столица патне Рйазаньри войевода Прокопи Ляпунов организациленӗ ополчени ҫитнӗ, унта, тӗпрен илсен, дворйансемпе казаксем пулнӑ. Анчах дворйансем, Мускава тӑшмансенчен тасатса ҫитеричченех, хӑйсен хушшинче влаҫа пайлама тытӑннӑ, хресченсене кайалах крепӑсла йӗркене кӗртме хатӗрленнӗ. Ҫакна пула ополчени саланса кайнӑ. Прокопи Ляпунова казаксем тытса вӗлернӗ.

Ҫав вӑхӑтра Чулхулара халӑх йухӑмӗн ҫӗнӗ центӑрне тунӑ. Чулхула ҫынни, земски старӑсгӑ Куҫма Минин 1611 ҫулхи кӗркунне Мускава хӑтарма халӑха ҫекленме чӗннӗ:

— Епӗр Мускав государствине пулӑшма килӗшетпӗр пулсан,— тенӗ Минин,—хамӑрӑн пурлӑхата, хамӑрӑн пурнӑҫа та шелемӗпӗр. Хамӑрӑн пурлӑха шеллемӗпӗр ҫеҫ мар, кирлӗ пулсан, хамӑрӑн ачасене те, арӑмсене те ҫак ӗҫшӗн парӑпӑр.

Вӑл ҫапла чӗннине итлесе Чулхула ҫыннисем укҫа пухма пуҫланӑ. Ополченине йерте пыма, Минин сӗнӗвӗ тӑрӑх, Димитрий Михайлӑвич Пожарски княҫа чӗннӗ, вӑл лайӑх войеводӑ тата Поҗшӑ пусмӑрҫисен хӑйар тӑшманӗ пулнипе палӑрса тӑракан ҫын пулнӑ.

Ку хутра ӗҫ ӑнӑҫулӑ пулни, ополченипе пӗрле помещиксене хирӗҫ кӗрешнӗ хресченсен хӑйпӗр отрйачӗсем хутшӑнниччен килнӗ.

1612 ҫулхи ҫуркунне Чулхулана пухӑннӑ ополчени, Минин тата Пожарски йертсе пынипе, тыла поҗаксенчен тасатас тӗллевпе Йарославӗљ ҫине кайнӑ.

Августӑн 20-мӗшӗнче ополченин тӗп вайӗсем Мускав патне ҫитнӗ. Мускав патӗнче тӑнӑ Иван Заруцки атаман казаксен хӑшпӗр пайӗсемпе кӑнтӑрала тарнӑ. Йулнӑ казаксем, ҫавӑнтах ополченипе пӗрлешмен пулин те, ӑна чӑрмантарса тӑман. Ополчени ҫитсен иккӗмӗш кунне Можайск йенчен поҗаксен Ходкевич йертсе пынӑ команди килсе

(Йулашки 4-мӗш страницӑра)

Англире економикăлă кризис вăйланса пырать

Англин хĕçпăшалланмали ĕçсен пит пысăк программипе (1 500 мĕлйун фунт стерлинг ытла) буржуалă економиссем çĕршывăн економикăлă пурнăçĕ çĕкленесси çинчен пысăк шав тума уса курчĕç. Çар заказĕсене пурнăçа кĕртнине вĕсем економикăлă кризисран çăлăнса йулмали лайăх шанчăк, тесе сăнласа кăтартнă. Çак çулăн пуçламĕшĕнче Англире пулма пултаракан çезонлă çĕкленӳ çине те пысăк шанăç хучĕç. Анчах çав шутласа хунисем тата шанса тăнисем нимĕн чухлĕ те пурнăçа кĕмерĕç. Англири хаçат-журналсенче çыракан цифрăсем економикăн мĕн пур кăтартăвĕсем те начарланса пыни çинчен калаççĕ.

Акă вĕсенчен хăшпĕрисем.

Иртнĕ çулхи апрел уйăхĕнче 1.080.400 тоннă хурçă шăратса кăларнă пулсан, 1938 çулхи апрел уйăхĕнче 938.600 тоннă çеç шăратса кăларнă. Чукун шăратса кăларасси 19 700 тоннă чакнă.

Ытти çĕршывсене таварсем сутасси нумай чакнă. 1938 çулăн пĕррмĕш кварталĕнче, тесе çырать „Економист", ытти çĕршывсене таварсем сутасси 1937 çулхи пĕррмĕш кварталтинчен 8 проц. чакнă.

Англи промышлĕннăçĕн чи кирлĕ отраçлисенче — пир-авăр тата суднасем тăвакан промышлĕннăçсенче — кризис уйрăмăнах вăйлă палăрчĕ. 1937 çулхи март уйăхĕнче çип арласси производства пултарулăхĕн 92 процентĕ чухлĕ пулнă пулсан, çак çулхи феврал уйăхĕнче 75 процент, март уйăхĕнче — 65 процент çеç пулнă. Тинĕс ведăмстви пите пысăк заказсем парать пулин те, суднасем тăвакан промышлĕннăç производства пултарулăхĕн 65 процентран ытлах мар ĕçлет.

Хал ĕнтĕ Англири паллă журналис Коллин Брукс та: „Англи економикин чăн-чăн лару-тăрăвĕ, хĕçпăшалланмали программăна тултарасси çинчен суйса мухтаннине пăхмасăрах, хăрушă пулса тăрать", тесе йышăнма васкать. Консерваливлă хаçат „Дейли Мейл" те унтан кайа мар хурлăхлă картинă çутатса парать, çĕршыври економикăлă лару-тăрăва хакласа, вăл çапла çырать: „Ытти çĕршывсене тавар сутасси чакса пырать, ĕççĕр тăрса йулнисен йышĕ ӳсет, налуксем пысăкланса пыраççĕ, халăхăн тавар илес пултарулăхĕ чакать, пурнăç пĕрмайах хакланса пырать".

Англи буржуазийĕ тата лендлордсем кризисăн пĕтĕм йăвăрлăхне рабочи клас çине тиеççĕ. Ĕççĕр тăрса йулнисен йышĕ пĕрмайах ӳссе пырать. Иртнĕ çулти йулашки 4 уйăх хушшинче кăна ĕççĕр йулнисен хисепĕ 356 пин çын хутшăннă. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне, официаллă пĕлтерӳсем тăрăх, ĕççĕр йулнисен çарĕ 1.665 пин çын пулнă. Пĕррмĕш квартал пĕтнĕ тĕле вĕсен хисепĕ 1.810 пине çитнĕ. Тавар хакĕсем татти-сыпписĕр ӳссе пыраççĕ. Англири „Лейбер Монтли" журнал пĕлтернĕ тăрăх, рабочи çемйинче çимели йапаласем илме тухакан тăкак, таварсем хаклăланнипе 33 процент ӳснĕ. Англири фермăсен пурнăçĕ те çавнашкалах йăвăр. Кăçал çанталăк типĕ тăнипе вăл тата та йăвăрланчĕ. Çăмăр пулман пирки курăксем хăрса кайнă, кĕр тыррисем, уйрăмăнах çуртыррисем, пысăк сийен курнă. Уйсенче выльăх апачĕ çук. Килти выльăх апачĕсен хакĕ ӳссе кайнă, çав вăхăтрах майракалă выльăхсен тата сурăхсен хакĕсем нумай чакнă.

Ситĕннĕ рабочисем хушшинче ĕççĕррисем питĕ нумай пулин те, капиталиссем ачасен вăйĕпе нумай уса кураççĕ. 14—16 çулхи ачасем час-часах кунне 15—16 сехет ĕçлеççĕ, уншăн вĕсем ытла та йӳнĕ ĕçукçи илеççĕ. Англири „Лейбер" журнал, Шеффилдри хурçă шăратакан савăтсенче ĕçлекен çамрăк хĕрачасем сехете 2,5 пенс (25 пуса йахăн) илеççĕ, тесе çырать. Ытларах услам илме тăрăшса капиталиссем ăнсăртран суранланасран сыхлас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çавăнпа та ĕçленĕ вăхăтра суранланнисем хăвăрт нумайланса пыраççĕ. Честерфилд сывăхĕнчи кăмрăк шахти нумайăх пулмасть сиксе кайнă, унта 72 çын вилнĕ. Ку вăл—пысăк авари. Çынсем вилнипе пулса иртекан пĕчĕк аварисем—Англири кăмрăк промышлĕннăçĕнче куллен пулакан йапала.

„1928 çултан пуçласа 1936 çула çитиччен Англири кăмрăк кăларакан шахтăсенче 8.362 горняк вилнĕ тата 1.296.817 çын суранланнă", тесе çырать „Економист" журнал.

Рабочисене ытла та хытă експлоатациленипе Англири капиталиссен усламĕ нумай ӳсничен нимĕн тĕлĕнмели те çук. „Хĕçпăшаллаллас производствăпа çыхăнса тăракан, металл туса кăларакан 30 компани илекен усламăн пĕтĕм сумми,—тесе çырать „Дейли геральд" хаçат,—йулашки виçĕ çул хушшинче 3.803 пин фунт стерлингран 11.747 пин фунт стерлинга ситти ӳснĕ. Анчах, хаçат палăртнă тăрăх, ку цифăра та чылай пĕчĕклетсе кăтартнă, мĕншĕн тесен акционерлă обществăсен балансĕнче услам цифрине хăйсене кирлĕ пек „тӳрлетеççĕ".

Çаксем пĕтĕмпех тата Чемберленĕн консервативлă правительстви тытса пыракан шалти тата тулашри реакцилĕ политикĕ рабочи класа тата Англири ĕççыннисен йышлă массине питĕ кӳрентереççĕ. 1938 çул ĕççынни массисен политикăлă активлăхĕ инхăсанхинчен ытларах ӳснипе паллă пулчĕ. Республикăлă Испанипе пĕр шухăшлисен нумай хисеплĕ демонстрацийĕсем, Испани ыйтăвĕпе нацилĕ чрезвычайлă конференци пухни—активлăх ӳснине кăтартакан уçă примерсем пулса тăраççĕ. Массăсем пĕрлĕхлĕ халăх фрончĕ тума ытларах çине тăрса ыйтаççĕ. Чылай профсойузсем тата лейборисла партин вырăнти органĕсем, тред йунионсен генералнăй совечĕпе лейборисла партин ĕçтăвакан комитетĕнчи йертсе пыракан бюрократсем чейен улталанине пăхмасăрах, реакци пусмăрне хирĕç кĕрешме, пĕрлĕхлĕ халăх фрончĕ тăвасшăн, Чемберлен правительствине сирпĕтсе антарассишĕн çирĕппĕн тухса калаçĕç.

Сорокин.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Иуйнĕн 14-мĕшĕнче Китайăн 20 самолечĕ Йанцзы йуханшывĕ çинче Гуйцзипе Анцин хушшинче (Вăтам Китай) Йапонин çар карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе Йапонин икĕ çар карапĕ шыва путнă тата иккĕшĕ хытăн сийенленнĕ.

Хенан провинцин çурçĕр пайĕнче Чженчжоупа Кайфын районĕнче (Çурçĕр Китай) çапăçусем чарăннă. Китайĕцсем Хуанхе йухан шывĕ патĕнчи пĕвене татса йанă пирки унти вырăна шыв илсе лартасси халĕ те чарăнмасть-ха. Шыв сасартăк пырса кĕнипе Йапонин 5 пин салтакĕ шыва кайса вилнĕ. Йапони çарĕсен тепĕр пайĕ, 7 пин çын, Кайфын районĕнче шыв илсе лартнипе хăйсен тĕп çарĕсенчен уйăрăлса кайнă, ăна та шывăйне пулас хăрушлăх хăратса тăрать. Кунсăр пуçне, Йапони çарĕсен 250 тупă, 80 танк, 100 бронепуйăс шыв айне пулнă.

(ТАСС).

Полаксен XVII-мĕш ĕмĕрти интервенцийе

(ЙУЛАШКИ)

тухнă. Вĕсем Китай-городра тата Кремĕлте тăнă полаксен гарнизонĕ патне кĕме хăтланса ополченĕцсем çине сиксе ӳкнĕ. Çапăçу вăхăтĕнче казаксен пĕр пайĕ ополченĕцсен йенне куçнă, вара вĕсемпе пĕрле полаксене кайала сирсе йанă. Тепĕр кунне икĕ йенĕ те кунĕпех çапăçăва хатĕрленнĕ.

Ходкевич августăн 24-мĕшĕнче ополченине çĕмĕрме çĕнĕрен хусканнă. Полаксем ополченĕцсене каллех хĕсĕрленĕ. Ун чух вара Минин Пожарскинчен çапла ыйтнă:

— Пар мана темиçе çĕр çын, епĕ полаксем çине тапăнам,— тенĕ.

Пожарски килĕшнĕ. Минин темиçе çĕр çынпа хĕсĕрлесе пыракан полаксене флангран тапăнса, вĕсене кайала чактарнă. Ку вăл ополченĕцсене çĕклентернĕ. Вара вĕсем полаксем çине пĕр харăс тапăннă та, вĕсене çĕмĕрсе тăкса кайала ывăтса йанă. Ходкевич хăйĕн йулашки çарĕсемпе Можайкки çулĕпех Мускавран кайала чакнă. Анчах Полшăн Мускаври гарнизонĕ тата ултă ерне йахăн тытăнса тăнă. Çав вăхăтра ополченĕцсем пусмăрçăсене хирĕç кĕрешме казаксемне татаклĕнах пĕрлешнĕ.

Усăсăрах пулăшу кĕтсе тăнă Полшă гарнизонне ытларах та ытларах хĕсĕрлесе пынă.

1612 çулхи октăберĕн 22-мĕшĕнче ополченĕцсем Китай-город стенисене штурмпа тытса илнĕ, полаксем Кремĕле кайала чакнă. Тата темиçе кунран (октăберĕн 26-мĕшĕнче). Кремĕлте çирĕпленсе ларнă Полшă гарнизонĕ ополченĕцсене парăннă.

Çапла вара хăйĕн тăван çĕршывне сыхлама çĕкленнĕ халăх вырăс столицине Полшă пусмăрçисенчен хăтарнă.

* * *

Полшă панĕсем çав урока çапах та манса кайнă. 1918 çул вĕçĕнче хăйне уйрăм Полшă государствине тунă хыççăн аласа хăйсен аллине илсен, Полшă панĕсем совет халăхĕ хăйĕн аллине илнĕ çĕрсене çĕнĕрен хапсăнма пуçларĕç. Антантă пулăшнипе 1919 çулта вĕсем Белоруççи столицине—Минск хулине—тата Украинăн пĕр пайне тытса илчĕç, 1920 çулхи çуркунне, пĕтĕм Украинăна тытса илме ĕмĕтленсе, Совет Российĕ çине походпа килсе Кийĕва туртса илчĕç. Вара Хĕрлĕ Çар вĕсене çĕнĕ урок пачĕ, ăна вĕсем халĕ те манмаççĕ-ха. Кирлĕ таранах ласкаса тăкнă хыççăн, вĕсем ирĕксĕрех Совет Российĕне килĕшӳ тума сĕнӳ пачĕç, çакăн хыççăн вĕсем тытса илнĕ çĕрĕн нумайрах пайне Белоруççипе Украинăна кайала тавăрса панă.

Анчах Полшă панĕсем пирĕн çĕрсене тытса илесси çинчен вăрттăн шухăшлама пăрахмаççĕ-ха. Вĕсем ун çинчен уççăн калама хăйаймаççĕ, анчах тытса илме çăпах та хатĕрленеççĕ. Кун çинчен вĕсен тулти политики, пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнма хатĕрленекен Германи фашисĕсемпе „туслă" пурăнни те уççăнах калать.

Вырăс халăхĕ, унăн тăван çĕршывне пусмăрлама хăтланнă нимĕç тата полак пусмăрçисене пĕр хут çеç мар çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн аслă социалисăмлă тăван çĕршыв çине тапăнма хăйас пулсан, Совет Сойузĕнчи халăхсем тата чаплă Хĕрлĕ Çар тăшмансене малашне те çĕмĕрсе тăкĕç.

Франци сывлăш флотне вăйлатать

ПАРИЖ, иуйнĕн 14-мĕше (ТАСС). Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, министрсен совечĕ нацилĕ оборонă тата çĕршывăн укçа-тенкине çирĕплетес ыйтусемпе çыхăнса тăракан чылай саккунсене çирĕплетнĕ. Çĕнĕ саккунсенче, уйрăмăн илсен, сывлăш флотне вăйлатма тата летчиксен кадрне нумайлатма палăртнă.

Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бонне пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен каласа панă. Авиаци министрĕ Гуй ла Шамбр авиаци промышлĕннăçĕнчи лару-тăру çинчен тĕплĕн пĕлтернĕ, уйрăмăн илсен, май уйăхĕнчен тытăнса, малтан палăртса хуни пекех, кучухнехи çĕнĕ йышши самолетсене массăлăн туса кăларма пуçланине кăтартса панă.

Футбол

„Зенит" командин тепĕр çĕнтерĕвĕ

Горькирен килнĕ „Зенит" обществин футбол команди иуйнĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарти „Спартак" тата „Динамо" обществисен сборнăй командипе выляре.

Шупашкар футболисĕсем ку вăйăра та хăнасене çĕнтереймарĕç. Вăйă пуçланни 10 минут иртсенех шупашкарсен вратар айĕпĕпе „Зенит" команди сборнăй командăн алакне пĕррмĕш мечкĕ тапса кĕртрĕ. Малтанхи таймра вăйă шучĕ улшăнмарĕ.

Иккĕмĕш таймра сборнăй командă хăнасене хупăрла пуçларĕ. Вăйă пĕтесси 17 минута йахăн йулнă вăхăтра „Зенит" командине 11 метăртан çапмали штраф параççĕ, сборнăй командăри Хрисăнфăв йулташ ку мечка питĕ лайăх тапса кĕртет. Вăйă шучĕ 1:1.

Вăйă шучĕ танлаштарсан икĕ команди те хĕрсе кайаççĕ. Çав вăхăтра шупашкарсен защчити (Зефирăв) сарамсăр „противнике" парать. Хăнасем лайăх пассовкăпа выляса мечкăна шупашкарсен алакне нимĕн йăварлăхсăрах тапса кĕртеççĕ. Вăйă пĕтесси 7 минут йулсан, сборнăй командăн вратарĕ вăйă йĕркине пăсать, çавăншăн 11 метăртан çапмали штраф параççĕ. 11 метăртан тапнă мечка сеткăра, вăйă шучĕ 3:1. Горький команди çĕнтерчĕ.

Р. Шашков.

Токăрсен курсĕ

КАНАШ. Иуйнĕн 3-мĕшĕнче Канашри вакунсем йусакан савăтра токăрсем хатĕрлекен курс уçăлчĕ. Курсра пурĕ 30 çын вĕренет, вĕсенчен 15 хĕрарăм.

А. Медведĕв.

ТЕАТР

Башкиринчи чăваш театрĕ

Башкирсен автономлă республикĕнче чăвашсем йышлă. Вĕсем унта чылай çĕрте пурăнаççĕ. Бижбуляк, Киргиз-Майак, Аургазы, Стерлитамак, т. ыт. районсенче те пур вĕсем. Анчах пуринчен ытла чăвашсем Бижбуляк районĕнче йышлă. Вăл района пĕтĕмĕшпех чăваш районĕ теме те пулать.

Башкири республикĕнчи чăвашсем хушшинче художĕствăлă ĕçе туса пымашкăн Башкири Халăх Комиссарĕсен Совечĕ виçĕ çул кайарах чăваш колхоз театрĕ организацилеме йышăнчĕ.

Малтанах театăр питĕ хавшак ĕçлесе пынă. Ку вăл, пĕр йенчен, артиссене пĕтĕмĕшпе драмкружоксенчен пухнинчен, вĕсен театăрта ĕçлес ăсталăх çителĕклĕ пулманнинчен, тепĕр йенчен, йертсе пыракансем ĕçлеме пултарайманнинчен килнĕ. Пĕр вăхăтра театăр руководствинче халăх тăшманĕсем пулнă. 1937 çулăн вĕçĕнче театр пĕтсе ларас патнех çитнĕ. 1937 çулхи сезонра театăр пурĕ те пĕр çĕнĕ спектакль çеç лартнă тата кивелнĕ репертуартан концерт пеки тунă. Театăрăн авторитечĕ ӳкнĕ, унăн ĕçе колхозниксен кăмăлне кайман.

Театăрăн ĕçне аванлатса, ăна ура çине тăратас шутпа Башкирин искусствă управленийĕ 1938 çул пуçламĕшĕнче çав театăрта ĕçлемешкĕн Чăваш республикĕнчен квалификацилĕ вăйсем (7 çын) илсе кайрĕ.

Çавăнтанпа театăрăн ĕçĕ аванлансах пырать. 1937 çул хушшинче пĕтĕмпе те пĕр çĕнĕ постановкă панă пулсан, кăçал йанвар уйăхĕнчен пуçласа çак таранччен пилĕк çĕнĕ спектакль лартса пама ĕлкернĕ. Куракансем спектакльсене хавасланă йышăнаççĕ. Уйрăмăнах „Анисса" тата „Авлану" пйессăсем пысăк ăнăçлăхпа иртеççĕ.

Кăçал тата икĕ пйессă лартма палăртнă: „Земля" (Н. Виртă пйеси), „Шторм" (Белоцерковскин).

Театăр колективĕнче халĕ 18 çын çеç-ха, план тăрăх коллектив 31 çынна çитмеле. Пĕтĕмĕшпе илсен, коллективра пултарулă, самай талантлă артиссемех пур. Вĕсем спектакльрен спектакльсех творчĕствă йенĕпе ӳссе пыраççĕ. Уйрăмăнах кунта М. Михайлăв, Т. Шерни, Тимофейĕвă, Блинов, Смолькин тата Николайĕв йулташсен йатне асăнма пулать.

Театăрăн хăйĕн костюмĕсем, бутафори, реквизит çителĕклĕ темеле. Колхозсем тăрăх куçса çӳреме хăйĕн автомашинă пур.

Л. А.

Украинă театрĕ Шупашкарта пулчĕ

Чăвашсен государствă филармонийĕ чĕнне тăрăх, Украинăри куçса çӳрекен государствă академи театрĕ иуйнĕн 5-мĕшĕнче Шупашкара килчĕ. Кунта вăл иуйнĕн 14-мĕшчен пурăнса „Ой не ходи, Грицю тай не вечерници", „Майская ночь", „Сорочинская ярмарка", Наталка-Полтавка", „Вий" йатлă мусăкалă комедисене тата „Цыганка Аза". „Бесталанная", „Проданная дочь", „Хмара". „Тарас Бульба" драмăсене лартса кăтартрĕ. Куракансем нумай пулчĕç. 10 кун хушшинче Государствă Академи театрне 5.560 çын кĕрсе тухнă.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем Украинă артисĕсене чĕререн тав турĕç.

„Нарспи" поемăна удмуртла куçарнă

Чăваш поечĕ К. В. Иванов çырнă „Нарспи" поемă пичетленсе тухнăранпа кăçал çентăбĕр уйăхĕнче 30 çул тулать. Халĕ чăваш писатĕлĕсем çак чаплă поемă йубилейне иртерме хатĕрленме тытăннă. „Нарспи" поемă чăваш халăхĕн илемлĕ литературинчи йуратнă кĕнекесенчен пĕри.

Тутар республикĕнчи, Бавлă районĕнчи Галкинă посолокри Василий Заитăв колхозник „Нарспи" поемăна хал чăвашларан удмуртла куçарнă.

Чăваш йуррисем Ленинградра

Ленинградри государствă капелли хăйĕн кăçалхи концерчĕсен программине „Туçа йурри", „Туй, туй, туй, тесе" йатлă чăваш халăх йуррисене кĕртнĕ. Ку йурăсене вырăс композитăрĕ Белый йĕркеленĕ тата вăлах чăваш йуррисем тăрăх пĕр йурă импровизациленĕ. Ку йурă та капеллĕ программе кĕнĕ.

Чукунçул çине ĕç вăйĕ хăвăртрах тăратмала

Канаш — Шупашкар чукунçул строительстви çинчен Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх чукунçула августăн 1-мĕш тĕлне обиазатĕлнă туса пĕтермеле.

Çакна пурнăçлас пулсан тимĕр-бетон трубасене иуйнĕн 20-мĕшнелартса тăпра купаласа пĕтермеле, йăвăç кĕперсене иуйнĕн 15-мĕшне туса пĕтермелеччĕ. Анчах çак ĕç пурнăçа кĕмерĕ. Ку вăл строительствă срукне малала тăсать.

Пайанхи куна ĕç хăвăртлăхĕ çук-ха. Ĕç хăвăртлăхĕ çукки ĕç вăйĕ çитменнинчен килет. Трассă çине хăйăр тăкасси тата трубасем вырăнĕнчи шпал кĕлеткисене илсе труба лартса тăпра тултарасси пайанхи куна питĕ йапăх пырать. Кунта платформă çинчен хăйăр пушатакансем тата лашапа ĕçлекенсем кирлĕ. Вĕсем çук-ха.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх республикăри 13 районтан ĕç вăйĕ тăратмала. Нумай районсем ĕç вăйĕ тăратассине начар организацилеççĕ. Йĕлчĕк, Куславкка, Сентĕрвăрри, Вăрнар тата Ишлей районĕсем 200-шер çын тăратмала, Шăнкартам районĕ 250 çын тăратмала пулсан, вĕсем пĕр çын та йаман-ха. Шупашкар районĕнчен 490 çын вырăнне 120 çын анчах ĕçлеççĕ. Çĕрпӳ районĕнчен 220 çын вырăнне 104 çын, Канаш районĕнчен 100 çын вырăнне 20 çын ĕçлеççĕ. Патăрйел районĕнчен 250 çын вырăнне 23 çын.

Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем ĕç вăйĕ парас мар шухăшпа темиçе тĕрлĕ сăлтавсем тупаççĕ тата йурийех чăрмантарса тăракансем те пур. „Красный пахарь" колхоз председателĕ Кириллăв йулташ (Шăхасан р.) „плотина тăватпăр" тесе пĕр çын та памасть. Чурачăк йалсовет председателĕ вербовщикрен тарса çӳрет. Çеменăвски йалсовет председателĕ Шакăвкин йулташ (Çĕрпӳ р.) „Пирĕн çынсем „Акатуй" тăваççĕ", тет. Анатри Кипекçĕпе Патăрйел йалсовет председателĕсем: „Пирĕн çынсене хватер укçи тӳлемен", тесе çынсем памаççĕ. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Кириллăв йулташ (Тутарла Кăнаш йалсовечĕ) виçĕ колхознике чукунçул çинче ĕçленĕшĕн выгăвăр панă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленине пăсакансем ытти çĕрте те пур. Постановленине пăсма йурамасть, ăна пурнăçа кĕртес пулать.

М. Куçмин.

Колхозри командă

„Çăлту" колхозри (Шупашкар р.) комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксем футбол команди организацилерĕç. Колхоз правленийĕ футбол команди валли кирлĕ хатĕрсене туйанса пачĕ. Пуша вăхăтра çамрăксем футболла выляма тухаççĕ.

Анчах физкультурăпа спортăн районти комитечĕ колхозсенчи физкультурă коллективĕсене пĕртте йертсе пымасть. Çавăн пекех „Çăлту" колхозри футболиссене те пулăшни çук. Ку пулăшу питех те кирлĕ, мĕншĕн тесен нумай çамрăксем вăйă техникине лайăх пĕлмеççĕ-ха.

А. Николайĕв.

СУД

Канашри сыхăну уйрăмĕнче ĕçлекенсен ирсĕр ĕçĕсем

Канашри чукунçул уйрăмĕн почтинче ĕçлекенсем—начальнике Никитин, ответлă дежурнăйсем Гаврилăвпа Павлăв—хăйсен ĕçри вырăнĕсемпе уса курса, государствă пурлăхне çаратса пурăннă. Уйрăмăнах Павлăв, почтăпа паракан посылкăсен пулĕмĕнче пурăннă май, 9 посылкă çаратнă, Гаврилăв—3 посылкă. Çавăн пекех вĕсен дежурствинче мартăн 17-мĕшĕнче 1000 тенкĕ тăракан посылкă çухалнă, вăл посылкăна Хабаровскăран Йанкевич йачĕпе йанă пулнă. Ухтарсан киленче вăл вăрланă посылкăн йешчĕкне тупнă.

Çапла майпа Гаврилăвпа Павлăв ĕççыннисен посылкисене мĕн пурĕ 4.930 тенкĕлĕх вăрланă, çырусене, хаçатсене çухатнă. Апла пулин те, почта уйрăмăн начальнике Никитин, вĕсемпе çемйелĕ пулнă май кĕрешмен. Посылкă çухатнăшăн унăн хакне почтăри ытти работниксен ĕçукçинчен тытса йулнисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Çавна май вăл ĕçленĕ вăхăтра 82 посылкă çухалнă.

Çак ĕçе Канаш хулинчи халăх сучĕ апрелĕн 21-мĕшĕнче пăхса тухса, Павлăвпа Гаврилăва 5 çул хушши хупмала тата иккĕшĕнчен те 4.930 тенкĕ шыраса илмеле пригăвăр йышăнчĕ. Никитина 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермеле турĕ.

Пригăвăра иуйнĕн 9-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Сучĕ çирĕплетрĕ.

Çтепанăв.

1938 çулхи иуйнĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Шупашкарти пионерсен çуртĕнче Чăваш республикĕнчи çамрăк хĕрарăмсен республикăри иккĕмĕш сйесĕ уçăлать.

КУН ЙЕРКИ:

Çамрăк хĕрарăмсем хушшинчи воспитани ĕçĕ çинчен тата хĕрарăм çине феодалли-крепостникле пăхнин йулашкисене пĕтересси çинчен.

ПСÇЛКС Обкомĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР.

МЕДСАНТРУД СОЙУЗĔН ОБЛĂÇРИ КОМИТЕЧĔН

КУРОРТСЕНЕ КАЙМАЛИ

ПУТОВКĂСЕМ СУТЛĂХ ПУР

ХОСТА—иуйль—çентăбер, АЛУШТА—çентăбĕр, ТУАПСЕ—çентăбĕр, ЕВПАТОРИЙА—çентăбер, шыв çинче çӳрекен каймали çурта—иуйль—август.

Адрĕс: г. Чебоксары, Обком сойуза Медсантруд.

Пур шофĕрсене ТАТА автохуçалăхĕн руководителĕсене

1938 çулхи иуйнĕн 19-мĕшĕнче 19 сехетре „Динамо" клубĕнче (НКВД вход с Ярославской улицы) Шупашкар хулинчи шофĕрсен тата автохуçалăхсен руководителĕсен канашлăвĕ пулать.

Пур шофĕрсен те тата автохуçалăхсен руководителĕсен хăйсен обиазатĕлнă пымала.

ПСК(б) П Обкомĕн промышлĕннăçпа транспăрт пайĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленин Госавтоинспекци.

Чăвашшвейстройсойуза ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ

Аслă бухгалтĕр, финансист-економист, бухгалтĕр-консультант тата ĕççене туса пыракан КИРЛĔ

Улица Калинина, 49, Чувашшвейстройсойуз, сектор кадров. Тел. № 2—85.

Пайан кино-театрта	Çĕнĕ, илемлĕ саслă фильм „Червоний дозор" Сеанссем—6 сех. 30 мин. 8 сех. 30 мин. тата 10 с. 20 мин. пуçланаççĕ.

ШУПАШКАРТИ ПЕДАГОГИКĂ УЧИЛИШЧИ

1938—1939 ВĔРЕНӲ ÇУЛĔНЧЕ

III-мĕш класа вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет

III-мĕш класа вăтам шкулсенчен, рабфаксенчен вĕренсе тухнисене тата вăтам шкул программи чухлĕ пĕлӳ илнисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрекенсен çул шучĕ 18 çултан 35 çула çитиччен.

Зайавленисене директăр йачĕпе йамала йе килсе пама та йурать. Пĕрле çак докумĕнтсем кирлĕ:

а) Хăш çулта çурални çинчен свидетĕлствă;
б) вĕренни çинчен свидетĕлствă;
в) икĕ фотокартăчкă (кашнин çине ал пусса çирĕплеттермеле);
г) сывлăх пирки тухтăрсенчен илнĕ хутсем;
д) почтă маркисем иккĕ 20-шер пуслăх, ответ пама.

Документсем подлинникĕсем çеç кирлĕ.

Зайавленисене иуйнĕн 15-мĕшĕнчен августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

III-мĕш класа кĕрекенсем, вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен аттестат илнисемсĕр пуçне, августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен çак предметсемпе вăтам шкул программи тăрăх испытани тытаççĕ: вырăс чĕлхипе (çырупа тата сăмахпа), тăван чĕлхепе (çырупа тата сăмахпа), географи тата истори (сăмахпа), йестествознани (сăмахпа). Вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат тăратнисене вĕренме кĕнĕ чух вырăс чĕлхипе çеç тĕрĕслеççĕ.

Вĕренме илнисене стипенди тата хватер валли укçа параççĕ.

Занатисем çентăбĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 84.

ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный [illegible] № 385.

Гор. Чебоксары, Типография № 3 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.